Чебоксарская Ц. Б. им. Горького
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 февраль 15 Бĕтларикун
37 (4850)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
Телефонсем: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Р С Ф С Р

Пайан Мускавра Пĕтĕм Российăн XVI-мĕш созыври Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн IV-мĕш Çессийĕ уçăлать. Çессии „РСФСР Аслă Советне суйламали Положенин" Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн Президиумĕ ырланă пройектне пăхса тухса çирĕплетет. Пайан Мускаври Кремль тӳпинчен Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн членĕсем умĕнче, совет çĕрĕнчи халăхсем умĕнче, пĕтĕм тĕнче умĕнче аслă Российăн федерацийĕ уçăлса курăнать. Кунтан асларăх çĕршыв пĕтĕм тĕнчипе те урăх çук! Пуйан рудалă сарт-ту тӳрчĕсене те, хăватлă йуханшывсене те, куç ытамне кĕми вăрмансене те хăй ăшне вырнаçтарса, вăл çĕршыв икĕ материкăн талкăшĕсенче вĕçĕмсĕр анлă тӳрем вырăн пулса выртать.

Российă федерацийĕ хăй çĕрĕсен талкăшĕсемпе кăна мар, хăй сăрт-тăвĕсен пуйанлăхĕсемпе кăна мар, хăйĕн йуханшывĕсен хăвачĕпе кăна мар вăйлă. Вăл чи малтанах халăх пĕрлĕхĕпе тата хăвачĕпе вăйлă.

Вырăс халăхĕ çĕршер çулсем хушши хайарран кĕрешсе тата ырми-канми ĕçлесе хăйĕн государствине туса хунă. Тулашри тăшмансемпе кăна мар, тата патша правителствипе, помещиксемпе тата капиталиссемпе паттăрăн кĕрешсе рабочисемпе хресченсем Российăн государствăлă никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварчĕç. Халăха хăйсен влаçĕнче тытса тăрассине сыхласа усрас тесе тăван çĕршыва та сутма хатĕр пулнă експлоататорсем влаçра тăнă чухне, çак кĕрешӳ хакла ларнă. Хăйсен çĕршывĕшĕн чунтан чĕререн тăрăшакан хĕрӳлĕ патриотсене, ирĕклĕхшĕн, телейшĕн, пирĕн тăван çĕршыв никама та пăхăнса тăрас марришĕн халăхпа пĕрле пулса çапăçнă аслă çынсене ĕççыннисем пысăккăн хакланă.

Октяберти социалисăмлă аслă революцийĕ туса, помещиксен, капиталиссен, кулаксен експлоататорла класĕсене пĕтерсе хурса, совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕрĕ çине çирĕппĕн тăчĕ. Ăна кӳрентерме вăл никама та ирĕк памаст!

Советăн вунпĕр республикĕ тăванла туслашса коммунисăмшăн, халăхсен телейĕшĕн кĕрешеççĕ. Пурин те пĕр шухăш, пĕр кăмăл, хăйсен никам аркатайми союзне пĕр пек хĕрӳлĕн йуратаççĕ. Вĕсем пурте тĕлĕнмеле большевикла пĕр чăмăра пĕтĕçнĕ. Совет халăхĕсен чĕлхисем тĕслĕрен, вĕсен културин нацилĕ формă йенĕпе тĕслĕрен, анчах вĕсен партийĕ пĕрре—большевиксен партийĕ, вĕсен влаçĕ пĕрре—Советсен влаçĕ.

Халăхсен çак тăванлă семйинче вырăс халăхĕ—пĕртаннисем хушшинче асли пулса тăрать.

Пĕтĕм Совет Сойуз талкăшĕ 21.175,2 пин тăваткал километр пулсан, РСФСР çине 16.510,5 пин тăваткăл километр тивет. Совет Сойузĕнчи 169 мĕлйун халăхран—РСФСР территоринче 105 мĕлйун çын ытла пурăнать. Совет Российĕн промышленнăçĕ туса кăларакан продукци пĕтĕм Сойузри продукцин икĕ виççĕмĕш пайĕ ытларах пулса тăрать. РСФС Республикĕнче чи шултрарах промышленнăçла центрсем нумайĕш индустрилĕ гигантсем автомобил, трактор, авиаци промышленнăçĕн хăватлă завочĕсем вырнаçнă. РСФСР составĕнче—халăх чи нумайрах пурăнакан хуласем, вĕсем шутĕнче Мускав, Ленинград. Совет Сойузĕн варрине вырнаçнă йенчен илсен те, хăйĕн промышленнăçпа културăлă пахалăхĕ йенчĕн илсен те Совет Российĕн столици пĕтĕм тăванлă ССР Сойузĕн столици пулса тăчĕ. Мускав совет çĕршывĕнчи мĕн пур халăхсемшĕн, тĕнчери мĕн пур ĕççыннисемшĕн пекех, хаклă. Мускаври Кремль çинчи хĕрлĕ çăлтăрсем пĕтĕм совет çĕршывне, пĕтĕм тĕнчене çутатса тăраççĕ.

Пĕртанлă совет республикĕсен семйинче, хăй йертсе пыракан вырăн йышăннине вырăс халăхĕ чи малтанах патша правителстви ытларах пусмăрланă халăхсене çĕклеме, саралма, ӳсме пулăшас тĕлĕшпе усă курнă. Вăл халăхсем економикăпа културă ӳсĕмĕнче пуринчен ытларах йулса пынă. Совет Сойузĕнче „центр" тата „окраина" çине, „метрополи" тата „колони" çине пайлани çук. Ӳсмели тата рабочи класа воспитани памали никĕс пулса тăракан шултра промышленнăça мĕн пур республикăсенче тăваççĕ.

РСФСР Республикĕнче шултра промышленнăç продукцийĕ 1936 çулта 1913 çултипе танаштарсан 7.8 хут ӳсрĕ, а Белоруççи ССР-че—15,9 хут, Грузи ССР че—18.6 хут, Киргиз ССР-че—95 хут, Таджик ССР че—116 хут ӳсрĕ.

Совет влаçĕ çирĕм çул хушши пуранса Совет Сойузĕн мĕн пур халăхĕсене тач пĕрлĕхĕпе пĕтĕçтерчĕ. Вĕсем вырăс халăхсене хĕрӳлĕн йуратнипе ответлеççĕ, вырăс чĕлхипе, вырăс културипе тата литературипе тарăнăн интересленеççĕ.

Вырăс çĕрĕ çирĕм çул хушшинче палламала мар улшăнчĕ. Ӳсе тĕреклентĕç, лайăхланчĕç, унăн хулисем. Унăн колхозлă йалĕсем чечекленсе саралчĕç. Совет çĕршывĕн питех те маттур çыннисем хăйсен патриотла мухтавлă ĕçĕсемпе пирĕн çĕршыв çинчен калаçмала туса хучĕç. Çĕр чăмăрĕн пур кĕтесĕсенче те мĕлйуншар çынсем, пĕтĕм тĕнче „Российă" сăмаха ăшшăн савса калать.

Вырăс халăхĕ пĕтĕм совет çĕршывĕн халăхĕсемпе сойуз туса пĕтĕм тĕнчери чи вăйлă государствă туса хучĕ. Советлă республикăсен халăхĕсем пĕрле Сталинла Конституци çине тайанса государствăлă влаçăн пĕрлехи аслă оргăнĕсене туса хучĕç. Пĕтĕм тĕнчипе чи демократилĕ суйлав системи тăрăх суйласа хăварнă ССР Сойуз Аслă Совечĕн хăвачĕпе пĕрлĕхĕ Совет Сойузĕн тусĕсене те, тăшмансене те унăн вăйĕ çинчен кăтартса парса ĕнентерчĕç.

Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп комитетăн пайан уçăлакан Çессийĕ РСФСР-чи влаçăн аслă оргăнне суйламали Положенине сӳтсе йават тата çирĕплетет.

Суйлав Положенин пройекчĕ, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положени пекех, советлă демократи никĕсĕ çинче тытăнса тăрать. Социалисăмла государствăра çав никĕссем пĕтĕмĕшпех тĕрĕссине тата пурвăçлине опыт питех те пахан кăтартса пачĕ.

Суйлавсем пурне те пĕртан, тӳрех суйламала права çине тайанса тата вăрттăн сасăланипе пулса иртеççĕ. Ĕççыннисене кандидатсем тăратма тата вĕсемшĕн агитацилеме туллин ирĕк панă. Суйлава организацилес пĕтĕм ĕçсене общеcтвăлă организацисем контроль туса пыраççĕ.

ССР Сойуз Аслă Совечĕн суйлавĕсем суйлав Положенин мĕн пур пункчĕсене, чи пĕчĕк ĕçсем патне çитех, çав тери тарăнăн шухăшласа çырнине кăтартса пачĕç. Халĕ ĕнтĕ вĕсенче паллă улшăнусемех тумали нимĕн те çук. Суйлав округĕсене организацилени те, суйлав участкисене организацилени те, депутата суйлама кандидатсем тăратас, регистрацилес, вĕсен йачĕсене пичетлесе пĕлтерес пĕтĕм йĕрке те хăйне тĕрĕссе кăларчĕ.

Опыт, çапах та, больницăсенче, ача çуратмали çуртсенче, санаторисенче тата инвалидсен çурчĕсенче суйлавсене организацилес ĕçе хăшпĕр лайăхрах майсем кĕртме кирлине кăтартса пачĕ.

РСФСР Аслă Советне суйламали Положени пройекчĕн тивĕçлĕ пункчĕсене чирлĕ çынсене тата вĕсене пăхакан персонала лайăх майсем туса парассине шута илсе редакциленĕ. Положенин пройектне инçе çӳрекен пассажир пойăсĕсенче, карапсем çинче суйлавсем иртерес йĕркене, кĕртнĕ, вăл йĕркепе ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланă вăхăтра усă курнă.

РСФСР Конституцийĕ РСФС Республикĕн пĕр палатăлă Аслă Советне суйлама лайăх тăвать. РСФСР Аслă Советне суйламали суйлав округĕсене çакăн пек принципа тăваççĕ: округра 150 пин халăх пулмала.

РСФС Республикĕн çакăн пек никĕс çинче суйланнă Аслă Совечĕ республикăн чи лайăх ывăлĕсене, ĕççыннисен телейĕшĕн кĕрешессинче тĕрĕсленнĕ çынсене, оборонăпа хуçалăх организаторĕсене, социалисăмла ĕçĕн маçтăрĕсене, ăсталăхăн, искусствăн, културăн тава тивĕçлĕ работникĕсене пухса пĕрлештерет.

РСФСР-ĕн чи лайăх çыннисем Ленин—Сталин партийĕ ченнипе, партири тата партире тăман большевиксем, политикăла активлăхăн çĕнĕ çĕкленĕвĕн пуçне тăрĕç. Иккĕленмели те çук, РСФСР Аслă Совечĕн суйлавĕсем политикăла активлăх вăйлăн çĕкленнипе иртĕç. Каллех мĕнпур суйлавçасем, пĕр çын пек пулса, хăйсен государствăлă тивĕçне пурнăçа кĕртĕç, хăйсем большевикла партишĕн, унăн Сталинла Тĕп Комитечĕшĕн тата Совет правителствишĕн вĕçĕ-хĕррисĕр парăнса ĕçленине кăтартĕç, РСФС Республикĕн аслă çĕршыва тата аслă халăха тивĕçлĕ Аслă Советне туса хурĕç.

(Правда умстатйи)

„СССР В-6" дирижабль екипажĕн вилнĕ вĕçевçисем (сӳлте сулахайран сылтăмала): дирижабльĕн пĕрремĕш командирĕ Н. С. Гудованцев, иккĕмĕш командирĕ—И. В. Паньков, командирăн пĕрремĕш помошникĕ — С. В. Демин, командирăн иккĕмĕш помошникĕ— В. Г. Льянгузов, командирăн виççĕмĕш помошникĕ—Т. С Кулагин, пĕрремĕш штурмăн—А. А. Ритсланд, айалта: иккĕмĕш штурман—Г. Н. Мăвчков, аслă бортмеханик—Н. А. Коньашин, пĕрремĕш бортмеханик—К. А. Шмельков, бортмеханик —М. В. Никитин, бортмеханик—Н. Н. Кондрашев, бортрадист—В. Д. Чернов тата бортсиноптик—Д. И. Д. И. Градус.

„Таймыр" çинчен çутă сигналĕсемпе папанинцăсемпе калаçми

„ТАЙМЫР" БОРЧĔ, 12-II, 23 сехет (Радио тăрăх). Ернст Кренкель хăйĕн пĕлтерĕвĕсемпе пире пĕрмайах савăнтарать. „Çĕрле сирĕн прожекторăн çутине куртăмăр, кăнтарла „Таймыр" трубинчен тухакан тĕтĕме асăрхарăмăр". Унтан вăл карап çине çапла пĕлтерчĕ: „Упа сиккипех сирĕн йенеле чупса кайрĕ".

Тин çеç папанинцăсемпе çутă сигналĕсемпе калаçса илтĕмĕр. Кренкельпе малтанах калаçса килĕшнĕ тăрăх, 22 сехетре лагер йенеле прожекторпа сигналсем патăмăр. Папанин лагерĕнче магни çунтарса сигнал пачĕç. Пирĕн карапран çурçĕр-хĕвеланăç йенче магни çуннипе çутални лайăх курăнчĕ. Ун хыççăн папанинцăсемпе радио тăрăх калаçрăмăр: çутă сигналĕсене вĕсем те, епĕр те курнă.

Лагерпе çапла килĕшрĕмĕр: вĕсем февралĕн 13-мĕшĕнче тĕтĕм кăларса пире сигналсем параççĕ. Кренкель çапла каларĕ: епĕр самолйот йарас пулсан, папанинцăсем 4 сехет хушшинче айеродром хатĕрлесе çитереççĕ, терĕ. Анчах тӳрем пăр çуккипе самолйотсемпе усă курма май килмест-ха. Хамăр пынă çул çинче ниçта та аеродром тума йурăхлă пăр курмарамăр. „Таймыр" ĕнер кунĕпех темиçе çулхи хулăн пăр хушшипе пычĕ.

Пайан каç пулнă вăхăтра сивĕ çил вĕрме пуçларĕ. Пăрсем пĕрлешрĕç. Вĕсем кăштах сирĕлессе кĕтсе тăратпăр. Пирĕн координатсем: çурçĕр широтин 71 градус та 30 минучĕ, хĕвеланăç долготин 18 градус та 14 минучĕ. Халĕ çурçĕр-хĕвеланăç йенчен 3 баллă çил вĕрет. Сывлăшра сивĕ 20 градус. Тинĕс шывĕн тарăнĕшĕ 200 метр.

„Таймыр" çинчи експедици руководителĕ Остальцев.

„Епĕр вĕсене çĕклесе тухатпăр"

„ТАЙМЫР" БОРЧĔ, 12 II, 23 сехет те 50 минут. (Радио тăрăх). Мускавран Папанин вальли паракан „йулашки хыпарсене" илтлетпĕр. Ыран ирхине Иван Дмитрийевичран ыйтса пĕлетпĕр те, вăл „йулашки хыпарсене" илтмен пулсан, вара хамăр каласа паратпăр. Екипаж йăвăр ĕçе пула ывăннă пулин те, карап çинче хаваслăх лăпланмаст. Çынсем, çанталăка пăхмасăрах, Папанин лагерĕ патне çуран кайма ирĕк пама ыйтаççĕ.

Карап команди мана çапла каларĕ: „Начальник! Епĕр тăвата паттăра çĕклесех килетпĕр. Хăйсене анчах мар, вĕсен пурлăхне те пĕр винт йулмиччен пуçтарса килетпĕр".

Вăхăтра тăманнисене çывăрма выртма хушмала килчĕ. Ыран кунĕпех йăвăр ĕç тумала пулать.

„Таймыр" çинчи експедици руководителĕ Остальцев.

„Таймыр" механисăмĕсем лайăх ĕçлеççĕ

„ТАЙМЫР" БОРЧĔ, 13 II, 00 сехет те 50 минут. (Радио тăрăх). 8 баллă хулăн пăр хушшинче тăратпăр. Пайан, пăра аммоналпа çĕмĕрсе, малала кайатпăр. Папанин ушкăнĕн пăрĕ патнех çитме шутлатпăр.

„Таймыр" механисăмĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Февралĕн 12-мĕшĕнче хулăн пăр хушшипе 20 милĕне йахăн кайрăмăр.

Халĕ уйар та сивĕ çĕрле тăрать. Уйăх пăхать. Вахтăра тăман çынсем канаççĕ. „Таймыр" сăмси тĕлĕнче Гренландин çӳлĕ те хитре сыранĕсем курăнаççĕ. Папанинцăсем пирĕнпе пĕрмайах сыхăну тытаççĕ.

„Таймыр" çинчи експедици руководителĕ Остальцев.

„Мурманец" тата „Йермак" çинчен пĕлтернисем

„Мурманец" капитанĕ Ульйанов йулташ февралĕн 12-мĕшĕнче 24 сехетре карап хăш вырăнта пулни çинчен пĕлтернĕ. „Мурманец" çав вăхăтра çурçĕр широтин 69 градус та 40 минутĕнче хĕвеланăç долготин 19 градус та 42 минутĕнче пулнă. Çил вĕрсе тăнă, хумлă пулнă. Сивĕ 6 градус. Карап шултра пăр татăкĕсем хушшипе пынă. Тинĕс хумханса тăни карапа канăç паман.

Ульйанов йулташ тата „Мурманец" таврииче пăр мĕнли çинчен пĕлтернĕ. Карап çинчен курăнакан пăр 3 метр ытла хулăнăш, кăнтăр-хĕвеланăç йенеле, сехетре 0,5 милĕрен кайарах хăвăртлăхпа куçса пырать.

„ЙЕРМАК" борчĕ. 13-II, 9 сехет те 20 минут (Радио тăрăх). Пăрçĕмренĕн координачĕсем; çурçĕр широтин 60 градусĕ, хĕвелтухăç долготин 27 градус та 6 минучĕ. Талкишпех пĕлĕтлĕ, тĕтĕм пек йăсăрланса тăрать. Çурçĕр-хĕвелтухăç йенчен 2 баллă çил вĕрет, Сивĕ 2 градус.

Аеродром хатĕр

БАРЕНЦБУРГ, 13-II. (Радио тăрăх. ТАСС корр.) Кольбей бухтин çыранĕнче, Баренцбургран инçе мар, Совет Сойуз Геройĕн Спирин йулташăн експедици самольочĕсем вальли аеродром хатĕр.

БОГАЧЕК.

Шмидт йулташ телеграмми

„Йермак" пăрçĕмĕренĕн борчĕ, февралĕн 14-мĕш 00 сехет те 15 минут

„Мускав, Микойан тата Ушаков йулташсене.

Ленинград, Жданов тата Белорусов йулташсене.

Финский заливран тухрăмăр. Хăвăртлăх сехетре вунпĕр миль ытла. „Таймыр" Папанин пăрĕ патне çывхарса пынишĕн савăнатпăр.

Шмидт".

Шторм хыççăн

„МУРМАН" БОРЧĔ, 12-II, 18 сехет те 5 минут. (Радио тăрăх, ТАСС корр.). Гренланди патнеле кайатпăр. Пайан ирхине 10 сехетре нуль градус урлă каçса хĕвеланăç полушарине кĕтĕмĕр. Çĕрле пăр патне çитетпĕр, тесе шутлатпăр. Радистсем çанталăк çинчен хыпарсем илчĕç: Гренланди тинĕсĕнче—вăйлах мар шторм. Анчах карап екипажĕшĕн, Норвеги тинĕсĕнче вăйлă штормпа кĕрешнĕ хыççăн, çав шторм хăрушă мар.

Папанин ушкăнĕн пăрĕ патнеле кайса, февралĕн 10-мĕшĕнче „Мурман" калама çук вăйлă штормa лекрĕ. Карапăн хӳре тытса пымали пăсăлчĕ. Çавăн хыççăн вăл алхасса кайнă тинĕс хумĕсен аллинче талăк çурă хушши вăхăт пулчĕ. Океан хумĕсем карапа турпас татăкĕ вырăннех ывăтрĕç, палубă çине те шыв сирпĕнетчĕ. Хумсем „Мурмана" 57 градус таран тайăлтараччĕç. Çавăн пек условире хӳре тытмали механисăмсене йусамала килчĕ. Карап машинисĕ Братанов йулташ тата кочегарсем Селиверстовпа Скукаревский йулташсем большевикла хăватлăхăн, çĕршывшăн пĕтĕм чĕререн тăнин тĕслĕхĕсене кăтартрĕç. Вĕсем, хумсем çапса тинĕсе ывăтса йарасран хăрамасăр, хӳре тытса пымали механисăмсем патне анчĕç. Унта ансан, вĕсем шыв витмен тумтирсĕрех мăй таран пăрлă шывра 40 минут хушши, ĕçлерĕç, лукăн чайкисене пăрса кăларса, шыва запаслă трӳма йухтарса йама тăрăшрĕç. Çав йулташсем тăрăшса люка уçрĕç, шыва йухтарса йачĕç. Вара механисăмсене йусама тытăнчĕç. Калама çук йăвăр условире ĕçлемеле килчĕ пулин те, хӳре тытса пымали механисăмсене 23 сехет хушшинче йусаса çитерчĕç. Шторм лăпланма пуçласанах, „Мурман" каллех хĕвеланăç йенеле кайма пуçларĕ.

Çак кунсенче „Мурман" çинчи радистсем—Йаровицын, Мотыцин, Кулебакин тата Йевсейев йулташсем пысăк маçтăрлăхпа ĕçлерĕç. Шторм вăхăтĕнче вĕсен акробатсем пекех пулмала килчĕ. Йаровицын, сăмахран, хăйне сĕтел çумне çыхса лартатчĕ. Радиостанци текех выльанса тăратчĕ.

„Мурман" радио тăрăх талăк тăршшĕпех пĕр татăксăр сыхăну тытса пычĕ. Пирĕн радистсем „Таймыр" радиограмисене малала парса тăчĕç.

Йермаков.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ февралĕн 11-мĕшĕнче „МТС-чи тракторсене, комбайнсене, тата йалхуçалăх машинĕсене йусас ĕçе организацилесси тата вăл ĕç вальли укçа-тенкĕ парса тăрасси çинчен" постановлени йышăннă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕ çакна кăтартса парать: тракторсемпе комбайнсене йусассине хальхи вăхăтри пек тĕпрен тăвакан ремонт, вăтам тата текушчи ремонт çине пайлани вĕсене техникă тĕлĕшĕнчен тĕплĕн пăхса усрама кирлĕ условисем туса памаст, машинă-тракторлă парка ĕçе йурăхлă йĕркере тытса тăма пулăшмаст.

Укçа-тенкĕ парса тăрас—ĕçри хальхи системă тĕп вырăнта тăракан текушчи ремонта вăхăтра туса пама хавхалантармаст, МТС-сен руководителĕсене машинă-тракторлă паркпа хуçасăрла усă курас çул çинеле тĕксе йарать, çакна пула тракторсемпе комбайнсене тĕпрен ремонт тăвасси çулсеренех ӳссе пырать.

МТС-сене организацилĕх тĕлĕшĕнчен малала çирĕплетсе пырас шутпа тата машинă-тракторлă паркпа усă курас ĕçе тĕпренех лайăхлатас шутпа, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ постановлени йышăннă. Вăл постановлени тăрăх тракторсемпе комбайнсене йусас ĕçе виçĕ тĕслĕ тăвасси—тĕпрен тăвакан ремонт, вăтам тата текушчи ремонт йĕрки пăрахăça тухать, тракторсемпе комбайнсемшĕн икĕ тĕслĕ ремонт—тĕпрен тăвакан тата текушчи ремонт пулать, ытти пĕтĕм йалхуçалăх машинĕсемшĕн—текушчи ремонт кăна пулать.

Çавăн пекех тата тракторсемпе комбайнсене йусас ĕç вальли укçа-тенкĕ парса тăрас ĕçре халиччен пулнă йĕркене те пăрахăçа кăларнă, вăл йĕрке вăхăтĕнче ремонт мĕнле пулмалине чăннипе тунă ĕçсене кирлĕ пек шута илмесĕрех туса пынă.

Кашни МТС аллинчех текушчи тата тĕпрен тăвакан ремонт вальли йатарласах укçа фончĕсем пулаççĕ, вăл укçа-тенке урăх ĕç вальли расхутлакансене уголовнă йĕркепе айăплаççĕ.

Тракторсене, комбайнсене тата ытти йалхуçалăх машинĕсене техникă тĕлĕшĕнчен тĕплĕн пăхса усрас тата вĕсене ĕçе йурăхла лайăх йĕркере тытса усрас ĕçре работниксене хавхалантарас шутпа трактористсене, трактор бригадисен бригадирĕсене, вĕсен помошникĕсене, йалхуçалăх машинĕсен механикĕсене тата МТС-сен аслă механикĕсене премисем парас йĕрке туса çирĕплетнĕ, мĕн чухлĕшер премина памалине кăтартса хунă. Çапла, сăмахран, хăйсемшĕн çирĕплетсе панă ĕç планне тултарнă тата трактора техникă тĕлĕшĕнчен пĕр пăсмасăр тавăрса панă трактористсем МТС-ран, хăйсем çумне çирĕплетсе хунă трактора текушчи ремонт тума уйăрса хунă, перекетленсе йулнă укçа-тенкĕн 40 проценчĕ чухлĕ премине илеççĕ. (ТАСС).

М

Сталинла вăйлă тырпулшăн

ЙĔПРЕÇ. Февралĕн 5-мĕшĕнче колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура Шчербиновски районĕнчи колхозниксем сталинла тухăçлă тырпулшăн ăмăртăва тухма чĕнсе каланине сўтса-йаврĕç.

Канашлура тухса калакансем пурте тенĕ пекех вăйлă тырпул туса илессишĕн социалисăмла ăмăрту пуçласа йарас тĕлĕшпе пахă сĕнўсем пачĕç. Малта пыракан колхоз председателĕсем çак ĕçри хăйсен паха опычĕсем çинчен каласа пачĕç.

Ку шутра уйрăмăнах Çирĕклĕри „Хĕрлĕ партизан" колхоза палăртма кирлĕ. Колхоз председателĕ Йефремов (комсомолец) çапла калат:

— Иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илтĕмĕр пулсан, вăл пирĕншĕн çителĕксĕр.

„Хĕрлĕ партизан" колхоз çуракине хатĕрленессипе районра чи малти вырăнта тăрат. Çавăнпа та вăл колхозри паха ĕçсем канашлура пур колхоз председателĕсемшĕн пример пулса тăчĕç. „Хĕрлĕ партизан" колхозăн акмали вăрлăх хатĕр, пурĕ 337 центнер трийер витĕр кăларнă. Вăрлăх пĕтĕмпех суртлă. Минераллă çăнăхсене кўрсе килес плана 300 проц. пурнăçланă. Уйа 1300 лав торф, 2630 лав тислĕк кăларнă. Кунсăр пуçне 300 лав йушкăн кăларнă.

Ĕç лашисене çуракине мăнтăр кăларассипе коньухсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Çак ыйтупа февралĕн 5-мĕшĕнче коньухсемпе канашлу туса иртерчĕ. Коньухсем лашасене çуракине мăнтăр та тĕреклĕ кăларассипе ăмăртса ĕçлеме пулнă. Пайанхи куна начар лаша пĕрре те çук.

Канашлура „Хĕрлĕ партизан" колхозпа ăмăртакан „Чувашия" колхоз председателĕ Сидоров йулташ та çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен каласа пачĕ.

— Епĕр çуракине хатĕрленсе çитнĕпе пĕрех. Вăрлăхсем хатĕр, суртласа хунă, машинăсем йусавлă. Тырпул тухăçне ўстерес тесе уйа торф нумай кăлартăмăр. Çĕре торфпа çемçетнипе иртнĕ çулта ыраш гектартан 18 центнер, сĕлĕ 24 центнер илтĕмĕр. Çакна шута илсе кăçал та уйа 318 лав торф кăлартăмăр,—тет Сидоров йулташ.

Шăртанри „Шурăмпуç" колхоз Шчербиновски районĕнчи колхозниксем чĕнсе каланине сўтсе-йавнă хыççăн, Кукшумри „Социалисăм" колхоза ăмăртăва чĕнчĕ. Анчах „Социалисăм" колхоз председателĕ Илйин ăмăртма килĕшнипе интерсе йанă. Ăмăртува тухасси çинчен колхозниксен пухувĕнче сўтсе йавман та. Кунта вăрлăхсем те хатĕр мар, суртламан, машинăсем йусавсăр, çĕре çемçетмелисене хатĕрлемеççĕ. Ĕç лашисемшĕн тăрăшни çук.

Канашлу çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене палăртса, вĕсене малашне пĕтерсе пымали татăклă майсене йышăнса хăварчĕ.

Канашлува пухăннă колхоз председателĕсем Шчербиновски районĕнчи колхозниксем сталинла тухăçлă тырпулшăн ăмăртăва тухма чĕнсе каланине йышăнчĕç. 1938 çулхи çуракине большевикла хатĕрленме, сталинла тухăçлă тырпулшăн кĕрешме Вăрнар районне социалисăмла ăмăртăва чĕнчĕç.

— Епĕр сталинла тухăçлă тырпулшăн Вăрнар районне ăмăртăва чĕнсе, хамăр хушăмăрта—колхозпа колхоз, бригадăпа бригадă, звенопа звено хушшинчи ăмăртăва сарса йаратпăр. Сталин йулташ çулсеренех 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илмеле тенĕ лозунга кăçал пурнăçа кĕртсе çитерессишĕн большевикла кĕрешетпĕр,—терĕç колхоз председателĕсем.

Дм. Михайлов.

Ăмăртăва анлăн сарса пымала

Çĕрпў районĕ кăçалхи тухăçлă тырпулшăн ăмăртăва тивĕçлипе пуçарса пымаст. Районра вăрлăхсем хатĕрлес, вĕсене тасатас тата суртсăр вăрлăхсене суртлисемпе улăштарас ĕçсем кайа йулса пыраççĕ. Колхозниксем тата йединоличниксем йенĕпе вăрлăх фондне 99 процент хывса çитернĕ. Апла пулсан та, уйрăм культурсем тăрăх хывса çитермен. Ака пăри вăрлăхне 41 процент, сĕлĕ вăрлăхне 89 процент ытларах, урпа вăрлăхне 92 процент çеç хывнă.

Çуракинче акса хăварма колхозсене 300 центнер клевĕр вăрлăхĕ кирлĕ пулсан, районра мĕн пурĕ те 151 центнер ытларах çеç пур.

Суртсăр вăрлăхсене суртлисемпе улăштарас плана 57,8 процент кăна пурнăçланă. Çĕрпў районĕнчи руководителсем „мĕн акан, çав шăтат," тенине ку вăхăтченех туйса илмен, ку вăхăтчен мĕн пур вăрлăхран 41 процентне çеç тасатса хунă. Районра çĕре çемçетмели вырăнти йапаласене хатĕрлесси те сўрĕккĕн пырат. План тăрăх, хĕлехи вăхăтра 173 пин лав тислĕк уйа турттарса кăлармала пулнă, 45.394 лав çеç кăларнă. Торф хатĕрлесе уйа турттарас плана та 12 процента йахăн çеç пурнăçланă. 70 пин центнер кĕл пухас вырăнне 1097 центнер ытларах анчах пухнă.

Йалхуçалăх машинисене йусасси те çителĕклĕ хăвăртлăхпа пымаст. 1819 плугран 996 плуг, 145 сейалкăран 108 сейалкă йусанă.

Районра кăçалхи вăйлă тырпулшăн ăмăртса ĕçлекен колхозсем чылай. Анчах вĕсен паха опычĕсене ытти колхозсене куçарас тĕлĕшпе калама çук начар ĕçлеççĕ. Акă, Анат Кипекçĕри „Ĕмĕт" колхоз вăйлă тырпулшăн „Пионер" колхозпа ăмăртува тухнă. „Ĕмĕт" колхоз иртнĕ çулта та çав колхозпа ăмăртса ĕçлесе районра пĕрремĕш вырăн йышăнма пултарнă. Ку колхоз вăтам хисеппе кашни гектар пуçне 20,93-шер центнер тĕштырă туса илнĕ. Данилов йертсе пыракан бригадă кашни гектартан 21,77-шер центнер, Сергейев бригади—22,83-шер центнер туса илнĕ.

Колхоз пĕтĕм сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕх илнĕ. Халĕ колхозниксем выставкă уçăлнине татах пысăк çитĕнўсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

„Ĕмĕт" колхозра Краснодар крайĕнчи Шчербиновски районĕнчи колхозниксем чĕнсе каланине тĕплĕн сўтсе-йавнă. Халĕ колхозри бригадăсем вăтам хисеппе кашни гектартан 150 пăт тĕштырă туса илессишĕн ăмăртаççĕ. Çуракинче акса хăвармали вăрлăхсене пур культурасем тăрăх та икĕ хутчен трийер витĕр кăларнă. Пăрса йышши тырăсене алпа пĕрчĕн-пĕрчĕн суйласа тасатнă. Иртнĕ çулта колхозра „Лорх" текен суртлă çĕрулми ытларах тухăç панине асăрханă, кашни гектартан 250 центнер туса илнĕ. Кăçал колхоз 12 гектар çинче акса хăвармалăх „Лорх" суртлă çĕрулми уйăрса хăварнă.

Çĕре лайăх, пĕлсе çемçĕтерсен çеç тухăçлă тырпул туса илме пулат. Çакна „Ĕмĕт" колхозникĕсем лайăх туйса илнĕ. Çавăнпа кашни бригадă çĕре çемçĕтермели йапаласене ытларах хатĕрлессишĕн тăрăшат. Декабĕр уйăхĕнчех 5 тоннă фосфорит çăнăхĕ, пĕрер тоннă аммиак селитри тата сильвинит, суперфосфат 3 тоннă кўрсе килнĕ. Кусемсĕр пуçне уйа 2 пин лав тислĕк, 600 лав торф кăларнă. Торф хатĕрлесе турттарас ĕçре Д. Алексейев, Й. Илйин колхозниксем стахановла ĕçлесе пыраççĕ. Вĕсем хăйсен нормисене 200-шер процент таран тултарса пыраççĕ.

Коньухсем те лашасене çуракине мăнтăр кăларассишĕн ăмăртаççĕ. Вĕсем кашнийех пĕр-перинпе ăмăрту договорĕсем туса çирĕплетнĕ.

Çуракине хатĕрленнĕ май, колхозра агрокружок организациленĕ, унта 40 çын тата колхоз активĕ 16 çын вĕренеççĕ.

Çакăн пек çуракине лайăх хатĕрленсе пыракан колхозсем татах та пур. Вĕсен паха ĕçĕсене ытти колхозсене куçарса пырас пулат.

Çĕрпў райçĕрĕç пайĕн çуракине хатĕрленес ĕçре кайа йулса пыракан ĕçсене çийĕнчех туса çитерmеле. Колхозсем, бригадăсем, звеносем хушшинче кăçалхи вăйлă тырпулшăн ăмăртăва кирлĕ пек сарса пымала.

Гр. Калинин.

САТЕЙЕВ НИКОЛАЙ Ф. — Вăрнар районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхозри стахановец.

Цыганова фото-ўкерчĕкĕ.

Ăмăртăва тухнă колхозсенче

ВĂРНАР. Краснодар крайĕнчи Шчербиновски районри йалхуçалăх стахановцисем, район тата колхоз руководителĕсем, МТС работникĕсем тата специалиссем пур колхозниксемпе колхозницăсене, совхозсенчи рабочисене, тракториссене, комбайнерсене, агрономсене, МТ Станцисемпе çĕрĕç органĕсенчи работниксене чĕнсе каланине пичетленĕ хаçата илсен, районри чылай колхозсем ку чĕнўве колхозниксен пухувĕсенче пысăк хаваслăхпа сўтсе-йаврĕç.

Чалăм Кăкшăмри Сталин йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен пĕрлешўлĕ пухувĕнче Шчербиновски районри йалхуçалăх стахановцисен чĕнўне сўтсе-йавнă хыççăн, колхозниксен пухувĕ пĕр сасăпах кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 140—150 пăт тĕштырă туса илессишĕн кĕрешме пулчĕ. Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре социалисăмла ăмăрту пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, колхозниксен пухувĕ вăйлă тырпулшăн „Ĕç йалавĕ" колхозпа ăмăртăва тухрĕ.

Колхоз пайанхи куна вăйлă тырпулшăн кĕрешессине анлăн сарса йанă. Ку тĕлĕшпе бригадăпа бригадă, колхозникпе колхозник пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Çак йулашки кунсем хушшинче колхоз 5000 лав торф, 1390 лав тислĕк, 840 лав йушкăн уйа кăларчĕ. Кунсăр пуçне колхоз 37,42 центнер кĕл, 65 пăт кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. 129,5 гектар çинче йур тытса хăварнă. Çуракине хатĕрленес ĕçре уйрăмăнах 4-мĕш бригадă (бригадирĕ Флегентов) малта пырат.

Флегентов йулташ бригади социалисăмла ăмăртува анлăн сарса пынипе пайанхи куна 1315 лав торф, 406 лав тислĕк тата 345 лав йушкăн уйа кăларнă. 20 пăт кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 36 пăт кĕл пухса хатĕрленĕ.

Данилов Артемий, Павлов Иван, Быкова Дарийа, Леонтйева Матренă йулташсем хастарлăн ĕçлесе пыраççĕ. Вĕсем хăйсен кулленхи ĕç нормисене йаланах 200—250 процентшер тултараççĕ.

Ўсĕмсемпе пĕрлех колхозăн çитменлĕхĕсем те пур-ха. Пайанхи куна çитсе колхоз йалхуçалăх машинĕсене йусаса пĕтермен, фосфорит çăнăхĕсене кўрсе кил се пĕтермен. Ку çитменлĕхсене пĕтерессишĕн колхозăн çине тăрсах ĕçлемеле пулат.

Çуракине хатĕрленес ĕçре колхозри стена хаçачĕ пысăк вырăн йышăнса тăрат. Стена хаçачĕ урлă йаланах ĕçри паха примерсене çутатса пыраççĕ, çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса параççĕ.

Кăкшăмри „Ĕç йалавĕ" колхоз та çуракине хĕрсех хатĕрленме тытăнчĕ. Пайанхи куна колхоз 3000 лав торф уйа кăларнă. Йалхуçалăх машшинĕсене пĕтĕмпех йусаса пĕтернĕ.

Хирпуçĕнчи „Çĕнтерў" колхозпа Рункăри „Кĕçĕн Çавал" колхоз ăмăртува тухнă. Ăмăртува тухса вĕсем хăйсем çине çакăн пек обйазательствă илнĕ: вăтам шутпа ыраш гектартан 21 цетнер, кĕрхи тулă 25 центнер, сĕлĕ 22 центнер, пăри 20 центнер туса илмеле. Ку задачсене пурнăçлама мĕн-мĕн тумалине ăмăрту договорĕнче кăтартса хăварнă. Çуракине тухиччен уйа 4500 лав тислĕк, 13500 лав торф, 70 лав фекали кăлармала. 1955 центнер минераллă удобренисем кўрсе килмеле, 296 центнер кĕл, 300 цетнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлемеле.

Çурхи тулă 60 гектар, сĕлĕ 100 гектар тата викă 10 гектар йаровизациленĕ вăрлăхсемпе акаççĕ. 28 гектар çурхи тулăна, 6 гектар кантăра мулчировани тăваççĕ.

Çуркунне фекали шывĕпе 65 гектар ыраш калчине апат параççĕ.

Ст. Улангай.

Çитĕннисене хутла вĕрентессине организацилемеле

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1936 çулти йанварĕн 16-мĕшĕнче „Хут пĕлменлĕхе пĕтерессипе сахал пĕлекенсем хушшинче ĕçлесси" çинчен постановлени йышăнни икĕ çул çитет. Анчах районри чылай йалсоветсем çак решенийе пурнăçа кертмеççĕ-ха.

Трак районĕнче пайанхи куна хутла пĕлменнисем 643 çын, сахал пĕлекенсем 1157 çын шутланаççĕ. Çакăн чухлĕ çынна вĕрентме районта 37 çĕрте хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсен шкулĕсем ĕçлемеле, халĕ вĕсем 21 çĕрте çеç ĕçлеççĕ.

Хашпĕр йалсоветсем çитĕннисене хутла вĕрентес ĕç çине чунсăрăн пăхаççĕ. Тоак, Карай, Исакова Итмар, Çавалçырма, Хозакасси тата Именево йалсовет председателĕсем харпăрхăй йалсоветĕнче хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсен шутне те пĕлмеççĕ. Йалсоветсен культсекцисем ĕçлемеççĕ

Нумай йалсоветсенче çитĕннисене хутла вĕрентмели шкулсене йачĕшĕн кăна организациленĕ. Вĕренме сахал çўреççĕ. Районĕпе çитĕннисен шкулĕсене çўресси 33 процент кăна. Албахтина йалсоветĕнчи çитĕннисен шкулне 23 çын çўрес вырăнне 5—6 çын çеç çўрет. Албахтинăри учителсен сойузĕн вырăнти комитечĕн председателĕ Й. Тихонов çитĕннисене вĕрентес ĕçе организацилессипе интересленмест.

Районти учителсен сойузĕн председателĕ Гурйев йулташ та учителсем çитĕннисене вĕрентес ĕçре мĕнле пулăшса, ĕçлесе пынине пĕлмест,

Мак. Иванов.

Тăвайсем васкамаççĕ

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВСК(б)П Чăваш Обкомĕ 1938 çулхи çуракине хатĕрленесси çинчен йышăннă постановленинче колхозсемпе МТС вăйĕ йалхуçалăх машинĕсене февралĕн 15-мĕшне пĕтĕмпех йусаса пĕтермеле тенĕччĕ. МТС директорĕсемпе районри çĕрĕç пайĕ пуçлăхĕсен йалхуçалăх машинисене йусассине тивĕçлипе пуçарса йамалаччĕ.

Анчах Тăвай районĕнчи МТС тракторĕсемпе трактор çумне кăкармали машинсене йусассипе чăтма çук кайа йулса пырат.

МТС ра пурĕ 42 трактор йусамала, вĕсенчен СТЗ маркăли—40, ЧТЗ маркăли 2 трактор. График тăрăх йанвар уйăхĕнче 17 трактор, февралĕн 20-мĕшĕнче 7 трактор йусамала пулнă пулсан, йанвар уйăхĕнче 12 трактор çеç йусанă. Февраль уйăхĕнче татах та кайа йулса пыраççĕ.

Тракторсене йусас ĕç кайа йулса пынин сăлтавĕ вăл—рабочисене пурнăç услови туса паманнинчен килет ĕнтĕ. МТС директорĕ Измайлов тата унăн политпай йенĕпе ĕçлекĕн заместителĕ Тихонов „çуракине тухиччен вăхăт пур-ха, унччен тем тумалăх та вăхăт пур" тесе, лăпланса ларaççĕ,

К. Лазарев.

Çĕршертен пĕри

Кăташ йалĕнчи (Йĕтĕрне р.) „Пионер" колхоз членĕ Г. Николайев ĕлĕк кĕтў пăхса нуша курса пурăннă. Халь колхозра маçтăр-тимерç пулса ĕçлет. Кăçал вăл ĕçкунĕсемшĕн тырпул нумай илчĕ, халь çĕнĕ пўрт лартма тытăнчĕ.

М. Моисейев.

Политкружок организацилерĕç

Çĕрпў районĕнчи „КИМ" колколхозра колхозниксене политикăна вĕрентме политкружок организациленĕ. Кружокра колхозниксем политграмăтăна вĕренеççĕ. Занятисем уйăхра икĕ хут пулаççĕ; унта „Ленин çулĕпе" тата „КИМ" колхозри активисем, пур е занятисене пер сиктермесĕр çўреççĕ. Занятисене Йаковлев коммунист иртерет.

А. Алексейев.

Йалсовет секретарĕсен курсĕ

ЕЛĔК. Райĕçтăвком йалсовет секретарĕсен курсне организациленĕ. Курсра 32 çын вĕренет. Курсран вĕренсе тухсан, вĕсем йалсоветсене ĕçлеме кайаççĕ.

Вас. Иефремов.

Февральти буржуалă-демократилĕ революци

(Малали. Пуçламăшĕ ĕнерхи 36(4849)-мĕш номĕрте).

II

Февраль революцийĕн çĕнтерĕвĕ

Сўлĕте çĕнтерекенсем, революцийĕн сухатăвĕсене шутласа тата çĕнĕ çапăçу вальли вăй пухса, уйав уйавланă вăхăтра, айалта пит те хĕрў ĕç пынă. Рабочисем заводран завода куçса, йунлă ĕçсем çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлтернĕ. Кăнтăрла нерсе пăрахнисене хăйсен куçпе курнă сынсем жандармсен тискер, ĕçсем çинчен каласа парса, итлекенсем чĕрине курайманлăх сарнă, палачсене çĕмĕрсе тăкас хĕрўлĕх чĕртнĕ. Демонстрацине çĕмĕрсе тăкнине курнă хĕрарăм-работницăсем хăйсен пичĕшĕсене тата улăшкисене çĕнĕ кĕрешĕве хавхалантарнă.

Çĕрле казармăсенче лăпкă пулман. Салтаксем пĕр-пĕрне курни-илтни çинчен каласа панă, мĕн пулса пынине ăçăнрах тăна илнĕ.

Çав революцилĕ çапăçусен хĕрўлĕ кунĕсенче большевиксем пур çĕрте те—фабриксемпе заводсенче, казармăсемпе урамсенче ырми-канми агитацилесе çапăçăва чĕннĕ, рабочисене тата салтаксене пĕрлештерсе пĕтĕçтернĕ. Иертсе пыракан центрсенчен охранкă çĕмĕрнипе, ирĕксĕр таталса каймала пулнă большевиксем предприйатисенче центрсем, тунă, сыхăнăва хăвăрт йĕркеленĕ, хăйсен хăйулăхĕпе тата рабочисем çĕнтересси çирĕппине ыттисене хавхалантарнă.

„Епĕ кĕрешў пуçланас умĕн урăхла каласан, ыран февралĕн 25-мĕшĕнче тенĕ чух çĕрле хастаррăн хутшăнса ĕçлерĕм,—тесе каласа парат Петроград рабочийĕ, забастовкăшăн çара мобилизациленĕскер.—Салтаксен канашлăвĕнче, пилĕккĕмĕш çулти йăнăша тўрлетес тесе 1-мĕш Семеновский полкпа пĕрле рабочисен сумне пĕрлешме йышăннă, анчах ир йенне жандармсем Семионовский полк салтакĕсене казармăсене хупса лартнă пулнă"[1])

Петроград комитетне арĕсленĕ хыççăн йертсе пырас ĕç Выборгский район комитетне куçнă. Çав кунах, февралĕн 28-мĕшĕнче, Выборгский районри большевиксен комитечĕн ларăвĕ пынă. Вырăнсенчен чĕнсе илнĕ йулташсем революцилĕ çамăл ўссе пыни çинчен тата малăла кĕрешме хатĕр тăни çинчен каласа панă. Райком çапла йышăннă: хĕçпăшаллă кĕрешĕве сарса йамала, хĕçпăшал склачĕсене тытса илмеле, городовойсене хĕçпăшалсăрлантармала.

Çамкăран пенине пăхса тăмасăр, пролетариат çине тăрса демонстраци тунă, рабочисем салтаксемпе хутшăнни, йулашкинчен, час-часах казармăсенех те хĕсĕнсе кĕнĕ большевиксен вăйĕ саралса пыни тўррĕнех пăлхав пулса тăнă: хресченсем помещиксене хирĕç сиксе тăнă пекех, салтаксем командирсене хирĕç тăнă. Февралĕн 26-мĕшне 27-мĕш хушшинче çĕрле Волынский полкăн вĕренў команди. Знаменский плошчадре рабочисем çине пенĕскер, демонстрантсене хирĕç хĕçпăшал тытма пăрахмала тесе йышăннă. Анчах çийелтен пăхма командирсене пассивлă хирĕçни кĕтмен çĕртен хастарлă кĕрешĕве куçнă. Ирпе ирех вĕренў командин начальникĕ кĕçĕн офицерпа казармăна пырса кĕрсен, вĕсене „урра" кăшкăрса винтовкăран персе вĕлернĕ—революци вăйĕ çав тери шала кĕнĕ: офицер мундирĕ тăхăннă крепостнике хресчен ĕмĕртенпе курайммасăр пурăнни хайар çилĕпе тухса тăнă.

Волынский полкăн восстанийĕнче пулнă çын революцин çав уйрăмах палăлă саманчĕ çинчен çапла каласа парат:

„Унтер-офицер Кирпичников пире приказ вуласа пачĕ—ыран командăна каллех ирпе 7 сехетре стройа тăратмала. Çав вăхăтра айакри тĕттĕм кĕтесре вунсакăр çын—хастартарах рйадовойсем, кĕçĕн чинсенчен пĕр темиçе взводный тата отделенный командирсем пухăнса тăчĕç, лару-тăру çинчен хĕрўллĕн сўтсе-йаврĕç, пурте вăра: ыран хамăр пĕлнĕ пек çавратпăр! тенĕ çирĕп решени йышăнчĕç. Мĕн тумаллине палăртса хучĕç: командăна штаб-капитан Лашкевич приказ панă пек 7 сехетре мар, 6 сехетре стройа тăратмала, çав хушăра пĕтĕм командăна хамăр йенне çавăрмала...

Вунсаккăрĕшĕ пур те темиçе минут шăппăн хăйсен вырăнĕсене саланнă вăхăтра тул çути çапрĕ.

Февралĕн 27-мĕшĕнче ирпе 6 сехетре 350 çынран тăракан командăна стройа тăратнă. Кирпичников сăмах тухса каларĕ. Вăл пĕтĕм ларутăрăва кăтартса парса мĕнле тата мĕн тумалине ăнлантарса пачĕ.

Агитаци кирлех те пулман. Ăнлантарса панă салтаксем çавна çеç кĕтнĕ иккен, боецсем пур те çирĕппĕн рабочисен хутне кĕме пулчĕç.

—Вилĕм тĕк вилĕм,—терĕç вĕсем,—анчах хамăрăннисене пеместпĕр.

Çав вăхăтра коридорта шпор чăнкăртатни илтĕнсе кайрĕ.

Командă асăрханса самантлăха шăп пулчĕ.

Студент пулнă прапорщик Колоколов, нумай пулмаст полка пырса кĕнĕскер, кĕрсе тăчĕ. Вăл сывлăх суннине хирĕç командă йалан пек ответлерĕ. Ун хыççăн командир Лашкевич кĕчĕ. Пурте тĕнкерсе тăчĕç. Шăп пулчĕ.

„Здорово, братцы!" тесе сывлăх суннине хирĕç: „Урра" кăшкăрса йачĕç—епĕр малтанах çапла каласа татăлнăччĕ.

„Урра" кăшкăрни лăпплансан, Лашкевич теме туйса илчĕ пулас, анчах каллех сывлăх сунса илчĕ. Ăна хирĕç каллех хăватлăн хайаррăн „урра" кăшкăраççĕ.

Лашкевич Марков унтер-офицер патне çаврăнса: ку мĕне пĕлтерет тесе тарăхса ыйтат.

Марков, винтовкăна алла тытса, çирĕп ответ парат: „Урра"—сирĕн приказанисене пăхăнмала маррине пĕлтерекен сигнал!"

Казармăн асфальт сарнă урайĕ тăрăх приклад сасси илтĕнсе кайрĕ. Затворсемпе шăкăлтаттарса илчĕç. „Чĕрĕ чух тухса кай!"—тесе кăшкăрса йачĕç салтаксем.

Лашкевич: „Смирно!" тесе кăшкăрма хăтланчĕ. Унăн командине никам та итлемест. Хабалов генерал урлă илнĕ „его величество Николай II" телеграммине вуласа парас тесе. Лашкевич йĕрке кўме ыйтрĕ. Анчах вăл салтаксене нимĕн чухлĕ те ўкĕте кĕртеймерĕ.

Командăна лăплантарас шанчăка сухатса, Лашкевичпе Колоколов алăкран чупса тухса кайрĕç. Коридорта вĕсем Воронцов-Велйамин прапорщикпа тĕл пулчĕç те, виççĕш те тарма тытăнчĕç. Марковпа Орлов хăвăрт чўрече кантăкне уçса йачĕç, винтовкисене тĕллесе тытрĕç, виçĕ офицер чўречепе танлашсан хайхи икĕ пăшал сасси йантраса кайрĕ.

Лашкевич хапха патĕнче хăма пек чăсăлса выртрĕ. Ытти офицерсем пăлхав çинчен çавăнтах полк штабне пĕлтерчĕ.

Кассăпа йалава йатса, офицерсем пурте пит хăвăрт полка пăрахса кайнă.

Çул уçă. Пĕтĕм отрйад Кирпичников командипе килкартине тухрĕ.

Харăссăн çўлелле персе сигнал пачĕç. Арĕсленисене гауптвахтăран ирĕке кăларчĕç. Çавăнтах сывăхри командăсем патне, пирĕн восстани тăвакан чаçпе пĕрлешме сĕнсе, делегатсем йачĕç. 1000 çынран тăракан евакуированнăйсен роти пĕр иккĕленмесĕр чи малтан хапăл туса пирĕн çумма пĕрлешрĕ.

Часах хатĕрлев вĕренў команди хутшăнчĕ"[1])

Салтаксем хушшине рабочисем пырса кĕнĕ.

Волынецсем урама тапса тухнă. „Урра" кăшкăрса, çўлелле персе, вĕсем кўршĕри Преображенскийпе Литовский полксем патне пынă. Вĕсен казармисем патне çитсе тăрсан, вĕсем унта пит час хресчен помешчике курайманнине чĕртсе йанă. Кунта та çавăн пекех полксен командирĕсене вĕлернĕ. Преображенецсемпе литовецсем волынецсен çумне пĕрлешсе хĕçпăшаллă массăпа Выборгский район патнеле, Петроградри революцилĕ пушарăн тĕп вучаххи патнеле, çул тытнă. Выборгский йенчен рабочисем иртенпех пысăк йышпа Нева пăрĕ урлă каçнă. Кăнтăр тĕлнеле выборжецсем Мускав полкин ротине, пулемйотсемпе Литейнăй кĕпере картласа тăнăскере, ўпĕнтерсе йарса, хулана тапнă, хăйсемпе пĕрле салтаксене хавхалантарса пынă. Çула май тапăнса арсенала йарса илнĕ. Çавăнтах васкаса отрйадсем йĕркелеме тытăннă. Пĕр сехет хушшинче 40 пин винтовкă салатса панă. Салтаксен сапаланчăк пăлхавĕ пролетариатăн революцилĕ йухăмĕпе тўррĕмĕн пĕрлешнĕ. Хĕçпăшаллă рабочисем восстани тăвакан салтаксене йертсе пынă. Пухăм хĕçпăшаллă алпа патша йĕркине сирпĕтсе йаракан революци пулса тăнă.

Салтаксен пăлхавĕ тата рабочисен демонстрацийĕсем Февраль революцийĕн ăнсăртри тата пĕр-пĕрне пăхăнми çулĕсем пулман. Рабочисен демонстрацийĕсем çар патша влаçĕсене пăхăнса тăнă чухнехи кунсенче салтаксен пăлхавне **хатĕрлесе аталантарса пынă. Рабочисем политикăлă йертсе пымасăр** салтаксен массăлă восстанийĕ пулман пулĕччĕ. Волынецсемпе литовецсем центра мар тата Думăна мар, рабочисем пурнакан Выборгский районна кайни ăнсăртран килсе тухман. Анчах рабочисен восстанийĕсене те, салтаксен пăлхавне те большевиксен партийĕ çине тăрса паттăррăн ĕçленипе хатĕрленĕ. Большевиксен партийĕн Петербург комитечĕ хăйне арĕслечченех листовкă пичетлесе кăларнă:

„Текех шарламасăр кĕтсе тăма май çук. Сăрка шинел тата кăвак блузă тăхăннă рабочи класпа хресченсем, Российăна пусарса тăракан намăса ĕмĕрлĕхех пĕтерме пĕр-пĕрне ал парса, пĕтĕм патша шайкине хирĕç кĕрешмеле. Уççăн кĕрешме вăхăт çитрĕ"[1].

Парти çул кăтаратса пыни йухăмсем иккĕш те çĕнтерўлĕ революцийе пĕрлешеччен пĕрмайах пĕр-пĕрин патне çывхарса пынă.

Хула часах хĕçпăшаллă салтаксемпе матроссем ларнă грузовиксемпе тата çăмăл автомобилсемпе тулса ларнă. Жандармсене тата кутăна перекен офицерсене йарса тытнă, хĕçпăшалĕсене туртса илнĕ те хĕрсе кайса тĕп тунă. Тĕрмесене çĕмĕрсе тăкнă. Çĕршер хастарлă революционерсем ирĕке тухса, кĕрешĕвçĕсен хушшинче тўрех хăйсен вырăнĕсене йышăннă.

Полици участкисем çуннă. Пĕр чарăнмасăр „урра" кăшкăрни районран района йанăраса тăнă.

[1] Чумаков И. С. асаилўвсем. Граждан вăрçи историйĕн алçыру фончĕ, №1284.

[1] Пажетных К. И. Волынцы в февральские дни. Асаилўсем. Граждан вăрçи историйĕн алçыру фончĕ, №488.

(Малали пулат).

Карйерис-коммуниссене хирĕç

ПСК(б) Парти Тĕп омĕн йанварти Пленумĕн решенийĕнче парти ретĕнчен кăларса, парти членĕсене хирĕç репреççилĕ мерăсем йышăнса хăйсене страхласа хăварса ырра тухма тăрăшакан карйерист-коммуниссене хирĕç татăклăн кĕрешме кирлине хыттăн кăтартса панă.

Сталинла Тĕп Комитет парти организацисен руководителĕсене ырми-канми воспитани парат, вĕрентет, вĕсенчен çын çине куллен тимлĕн пăхма, парти чл нĕ пирки сисĕмлĕ пулма, уншăн тăрăшма хушат. Тĕпком çакна тума хушнине пурнăçа кĕртни—большевикла чăн-чăн сыхлăхăн чи кирлĕ условийĕ пулса тăрат.

Парти Тĕпком Пленумĕн решенине парти организацисен руководителĕсемпе коммуниссен тĕплĕн вĕренсе, унтан тухса тăракан выводсене тумала. Ĕçре пулнă йăнăшсене хавартрах пĕтермеле, малашне большевикла паттăрăн ĕçлесе пымала. Çакна партин организацийĕсем нумайăшĕ ăнланса илнĕ. Хальхи вăхăтра парти райкомĕсемпе пуçламĕш организацисенче Парти Тĕпком Пленумĕн решенине сÿтсе-йаваççĕ унтан тухса тăракан выводсене тăваççĕ. Малашне мĕнле ĕçлесе пымалине палăртса, решенисем йышăнаççĕ. Çавăн пекех партин Вăрмар райкомĕ çинчен те калас пулат. Кунта та Тĕпком Пленумĕн решенине сÿтсе-йавса, унтан кирлĕ выводсем тăваççĕ, ĕçре пулнă йăнăшсене тÿрлетеççĕ. Анчах та, тÿрех калас пулат, Вăрмар районĕнче ку ĕç питĕ те майĕпен—аран-аран пулкаласа пырат-ха. Кунта васкамаççĕ. Пĕр айăпсăр çынсенĕ па тирен кăларни, вĕсем çинчен усал йат, ĕлек сарни Вăрмар районĕнчи пуçламĕш организацисенче те пулнă.

Акă Тагачин йулташ ПСК(б)П членĕ, 1933 çултанпа Вăрмар районĕнче МТС директорĕ пулса ĕçленĕ. Çавăнтах МТС директорĕн заместителĕ пулса парти членĕ Попов ĕçленĕ.

Август уйăхĕнчен пуçласа вĕсем хушшинче хирĕçÿ тухса кайнă. Хирĕçÿ тухасси акă мĕнрен пуçланнă: Тагачин йулташа курайман çынсем — вăл шурă арминче офицер пулнă, çĕр тара илсе акса пурăннă кулак ачи, тесе жалăба панă. Çак жалăбăна Попов илет те, тĕрĕслемесĕрех унта çырнине шанса пăрахат. Тагачин шанчăксăр çын пек пулса курăнма пуçлат. Тагачин (директор) хушнине Попов пурнăçа кĕртмест, хăй МТС директорĕ тумалли ĕçсене тума пуçлат. Вĕсем хушшинче йатлаçу, харкашу пуçланса кайат. Тагачин йулташ тăшман йатне те илтет.

Попов, вăлах МТС-ри парторг, 1937 çулти октяберĕн 1-мĕшĕнче коммуниссен уçă пухувне партире тăман рабочисемпе служащисене пуçтарат те Тагачин çĕр тара илсе акса пурăннă кулак ачи, шурă офицер пулнă çын, тесе сÿйа елек сарат. Çакăн хыççăн Тагачин йулташ çине МТС-ри коммуниссемпе рабочисем, служащисем шанчăксăр етем çине пăхнă пек, сиве куçпа пăхма пуçлаççĕ.

Тагачин кулак ачи, шурă арминче пулса совет влаçне хирĕç çапăçнă, тенĕ сăмах пĕтĕм районĕпе саланат. Тагачин халăх тăшманĕсемпе Кутăшовпа, Суворовскипе çыхăну тытса пурăннă хăрушă етем, тенĕ сăмах çÿренĕ. Хăшпĕр çынсем Тагачин йулташ пурăнакан хватере сыхлама пуçлаççĕ. Ăна пур çĕрте те шанмаççĕ. Хирĕç пулсан та чĕнмесĕр пăрăнса иртеççĕ, хăраççĕ унтан. Çапла парти тата халăх умĕнче „пĕтĕм шанчăка çухатнă“ Тагачина парторганизаци парти ретĕнчен кăларат.

ПСК(б)Парти Вăрмар райкомĕ Тагачин йулташа партирен кăларнипе килĕшмесĕр ĕçе тĕплĕн тĕрĕслеме Тагачин çуралса ÿснĕ, пурăннă çĕре, Йетĕрне районне комиççи йарат. Çав комиççи ĕçе тĕрĕслесе тухсан, Тагачин çинчен сарнă сăмахсем пĕри те тĕрĕс мар пулни палăрнă. Халь Тагачин йулташа кайала партине илнĕ. Вăл ĕлĕкхи пекех тăрăшса ĕçлет.

Çапла Тагачин йулташ Поповăн елекне пула пĕр айăпсăрах районри халăх умĕнче тăшман йатне илтнĕ. Анчах партин Вăрмар райкомĕ елекçĕ Попова халĕ те тивĕçлĕ ответ тыттарман-ха. Çавăн пекех Тагачин йулташ çинчен халăх хушшинче сарăлнă сăмах çинчен, халах хушшине сарăлнă сăмах пĕтĕмпех сÿйа пулнине халăха каласа ăнлантарса паман.

Партин Тĕп Комитечĕн йанварти Пленумĕн решенийĕсене хăвăрт пурнăçа кĕртесси—кашни руководителе социалисăм тăвакан çын патне сисĕмлĕ тата тимлĕхлĕ пулса пыма, большевикла сыхăлаха тата ытларах вăйлатма хушат.

Н. Косойкин.

Ответлă ĕçсенчи çĕнĕ кадрсем

ТРАК (хамăр корр.). ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланă вăхăтра партипе совет организацисем йалсенче политикăлă-массăлă ĕçе тимлĕн йĕркелесе пычĕç. Вуншар çĕршер колхозниксемпе колхозницăсем агитаци ĕçне хутшăнса, хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланă вăхăтра доверенлăй, агитатор, участкă комиççи членĕсем пулса ĕçленĕ çынсем чылайĕшĕ халĕ те массă хушшинче ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Тĕрлĕрен политикăлă-хуçалăхлă кампанисем иртернĕ чухне агитаци ĕçне вĕсем анлăн сарма тăрăшаççĕ. Çавăн пек çынсен ĕçне парти райкомĕпе райĕçтăвком сăнаса пырса, вĕсен пултарулăхне курса, вĕсене районри ответлă ĕçсене лартаççĕ. Акă, Уйкас Йунгапари суйлав участкин председателĕ пулнă Г. Илйин йулташа райçĕрĕç пай пуçлăхĕн заместителне лартнă. Вăл унчен колхоз председателе пулнă. Çĕрпÿ Суйлав округĕн членне—И. Йаковлев йулташа районри çулйĕр пайĕн пуçлăхне лартнă. Унчен малтан вăл йалсовет председателĕ пулнă. Суйлав комиççи председателĕ пулнă С Илйин халĕ районри социалă пулăшу пайне йертсе пырат. Вăл колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ. Йефимов йулташ халăх суд исполнителĕнче ĕçлет. Ăна ку ĕçе лартни нумайах пулмаст. Вăл суйлав вăхăтĕнче суйлав участки членĕнче ĕçлесе хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ. И. Филиппов йулташ суйлав вăхăтĕнче агиторта ĕçлерĕ. Агитаци ĕçне лайăх йĕркеленине шута илсе, ăна халĕ районри çыхăну уйрăмĕн начальникне лартнă. Малтан вăл йалти почтă уйрăмĕнче ĕçленĕ.

Йалсенчен района куçарса ответлă ĕçе лартни—çынсене ĕçре хăвăрт ÿсме пулăшат.

Агитаторсем, доверенлăйсем пулса ĕçленĕ çынсем хушшинче чылайĕшĕ халĕ хăйсен пĕлÿне хăпартасшăн тăрăшни уйрăмăнах палăрат. Участкăри суйлав комиççи членĕсем И. Григорйев, А. Спиридонов тата Çĕрпÿ суйлав округ комиççи членĕ А Степанова йулташсем Шупашкара Коммунисла йалхуçалăх шкулне вĕренме кĕнĕ. Суйлав комиççи председателĕ Клементйев Шупашкарти Йÿстици халăх комиссариачĕ çумĕнчи права шкулĕнче вĕренет. Суйлав вăхăтĕнче агитатор пулса ĕçленĕ А. Киселйов йулташ халĕ пропагандиссен курсĕнче вĕренет. Пурте вĕсем тимлĕн, тăрăшса вĕренеççĕ.

Пултарулă ĕçлекен çынсен йышĕ ÿссех пырат Шупашкарпа Канаш хушшинчи чукунçула тунă çĕрте колхоз председателĕнчен, бригадирсенчен, колхозниксенчен чылайĕшĕ хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Суйлав вăхăтĕнче ĕçленĕ агитаторсем колхозниксем хушшинче массălă ăнлантару ĕçне туса пычĕç. Çапла майпа ĕçлесе пирĕн район Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн куçса çÿрекен херлĕ йалавне илсе республикĕпе паллă, хисеплĕ вырăна тухрĕ. Ку ĕçре уйрăмăнах Димитров йачĕпе тăракан колхоз председателе Филиппов, „Çĕнĕ вăй“ колхоз председателĕ Матвейев йулташсем хăйсен пултарулăхне лайăх кăтартрĕç.

Бригадирсенчен Трофимов („Новый мир“ колхоз). Петров („Буксир“ колхоз), Матвейев („Красный восток“ колхоз). Михайлов („Прогресс“ колхоз) йулташсем аван ĕçлерĕç. Херарăмсенчен Лапшина, Федотова, Степанова колхозницăсем кăтартулă ĕçлерĕç. Вĕсен ĕçместечĕ—ăмăрту. Çавăнпа вĕсем мала тухса пычĕç. Çак хисеплĕ çынсемпе тăтăшах ĕçлемеле: тĕрлĕ ĕçсенче пулăшса пымала, районра, йалсоветра, колхозра ответлă ĕçе пуçарса пымала.

Закамский.

Комсомол организаци ĕçĕсем

Çĕрпури фельдшĕрсен шкулĕнчи комсомол организацийĕ çамрăксене коммунисла воспитани парас тĕлĕшпе пахах ĕçсем туса иртерет. Кунта 69 комсомолец. Вĕсем пурте политкружокĕсенче вĕренеççĕ. Пĕтĕмпе 9 кружок ĕçлет. Вăл шутран: икĕ кружокра парти историне вĕренеççĕ, 6 кружокра политграмăтăна вĕренеççĕ. Заньатисем вăхăтра пулса пыраççĕ.

Комсомолецсем кану вăхăтне те усăлă иртереççĕ. Кашни ернерех вечер туса иртереççĕ. Уйăхра 2 хут кино кайса куреççĕ.

Комсомол организаци çамрăксене комсомол ретне илессипе те чылай ĕçленĕ. Кăçал 20 студента комсомол ретне илнĕ. Халĕ 10 студент комсомола кĕме хатĕрленеççĕ. Вĕсем комсомолăн уставĕпе программине вĕренеççĕ. Çĕнĕрен кĕнĕ комсомолецсенчен 6-шĕ хĕр.

К. Михайлов.

ХĔРЛĔ ÇАРПА ТИНĔС ÇАР ФЛОЧĔ 20 ÇУЛ ТУЛТАРАС УМĔН

И. М. Матвейев—отлично вĕренекен допризывник (Канаш). Ворошиловла тĕл перекен значокне илме нормă тултарнă.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Шупашкарти хресчен çуртĕнче

Шупашкарти Хресчен çурчĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă уйава культ-массăлă ĕçсене вăйлатнипе хатĕрленет.

Уйав кунĕсенче Хресчен çуртне пынă колхозниксене Хĕрлĕ Çар çинчен ăнлантарас майпа докладсем пулаççĕ. Хресчен çурчĕн коллективĕ „Гражданская война“ произведенийĕнчен „Простая вещь“ сыпăкне лартса пама хатĕрленет. Хресчен çуртĕнче вăхăтлăха пурăнакансенчен хор кружокĕ организациленĕ. Хор халĕ „Песня о родине“, „Партизанская“, „Песня о Ворошилове“ тата ытти çĕнĕ йурăсене те вĕрентет. Йубилей вечерĕнче тухса выльама „Кожупряжь“ ертелĕ çумĕнчи струн оркестрне чĕннĕ. Вăл оркестр халь „Каховка“, „Конноармейская“, „Веселый ветер“, „Чапайев“ тата ытти йурăсене те выльама хатĕрленет.

Уйав ыран тенĕ кас малтан Хĕрлĕ Çар çинчен калаçу туса иртереççĕ, кайран „Неустрашимые“ йатлă кинофильм кăтартаççĕ. Уйав кунĕнче чаплă лару пулат. Унта Хĕрлĕ Çар çирĕм çул тултарни çинчен доклад туса параççĕ.

П. Тороней.

И. И. Иванов.—отлично вĕренекен допризывник (Канаш). Ворошиловла тĕл перекен значокне илме нормă тултарнă.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

ПИРĔН СĂМАХ

Пирĕн социалисăмла çĕршыв—пуйан та хăватлă çĕршыв. Епĕр, социалисăмла çĕршыв ĕççыннисем, Ленин—Сталин партийĕпе унăн Сталинла Тĕпкомĕ тата Совет правителстви йертсе пынипе, социалисăм строителствинче пысăкран та пысăк çитĕнÿсем турăмăр. Çавăнпа пирĕн çĕршывăн оборонă хăвачĕ вăйлансах, тĕреклесех пырат.

Февралĕн 23 мĕшĕнче Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Хĕрлĕ флочĕ 20 çул тултараççĕ. Çак уйава пĕтĕм ĕççыннисем пысăк çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Уйава хатĕрленнĕ май социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса пыраççĕ.

Хĕрлĕ Çар тата Хĕрлĕ флот 20 çул тултарнă йачĕпе Мускавпа Зарайск хулисенчи допризывниксем, Белоруççи стрелокĕсем, Тула хулинче аероклубра вĕренекенсем т. ыт. те, хăйсен çар, ĕçĕнчи тата политикăлă пĕлĕвĕсене тата çулерех хăпартас тĕлĕшпе, социалисăмла ăмăртăва тухрĕç. Çав ăмăртăва хутшăнса, Вăрмар районĕнчи вĕренÿ пунктĕнчи допризывниксем Чăваш республикĕнчи мĕн пур допризывниксене ăмăртăва хутшăнса, вĕренÿ пахалăхне хăпартма чĕнсе калатпăр.

Епĕр, Вутланти вĕренÿ пунктĕнче вĕренекен допризывниксем тата вĕсене вĕрентекенсем, Мускав хулин Сталинский районĕнчи Фрунзе йачĕпе тăракан заводри тата Вăрмарти допризывниксем чĕнсе каланисене сÿтсе-йаврăмăр. Епĕр те, пулас хĕрлĕармейецсем тата вĕсене вĕрентекенсем, вĕсен тĕслĕхĕпе, Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ флот 20 çул тултарнă йатпа социалисăмла ăмăртăва хутшăнса, вĕренÿ пункчĕн ĕçне ăнăçлăн туса пыма хамăр çине обйазателствăсем илетпĕр. Епĕр, допризывниксем, çар ĕçне тата политикăна „лайăхран“ кайа вĕренместпĕр, тесе сăмах паратпăр. Кунпа пĕрлех кашни допризывник „ГТО“, „ГСО“, „ПВХО“, „ВС“ нормисене парса, значоксем илме пулатпăр. Çавсене тума хамăр хушăра социалисăмла ăмăрту ĕçне сарса йаратпăр, Рабочисемпе Хресченсен çар уставĕсене пăхăнса заньатисене пĕр сиктермесĕр çÿретпĕр.

Епĕр, вĕренÿ пунктĕнче вĕрентекенсем, допризывниксене лайăх вĕрентсе кăларассишĕн пĕтĕм вăйран кĕрешетпĕр, вĕсене тăшмансемпе кĕрешес çĕрте Хĕрлĕ Çар ретĕнчи çирĕп боецсем пулмала тăватпăр.

Çар ĕçне вĕренмели вĕренÿ пункчĕн начальникĕ

Семенов.

Политрук **Быков**
Командирсем: **Кайаков, Анисимов**
Допризывниксем: **Филиппов, Петриков, Скворцов. Кириллов, Трифонов.**

Хĕрлĕ çар историне вĕренетпĕр

Чăвашсен Государствă музык училищи Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн уйавне хатĕрленет. Хĕрлĕ Çар çинчен, Совет Сойузĕн маршалĕсем çинчен тата тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх калаçусем тума пуçларĕç. Пĕрремĕш калаçу пулса иртрĕ те ĕнтĕ. Иккĕмĕш калаçу февралĕн 14-мĕшĕнче пулмала. Вăл калаçура В. Иванов преподавател „Сталин тата Хĕрлĕ Çар“ çинчен каласа парат. Февралĕн 23 мĕш кунĕ тĕлне Ворошиловла тĕл перкенсен ăмăртăвĕ пулса иртет. **К. Никитин.**

Хĕрлĕ Çар çинчен йурăсем йурлама вĕренеççĕ

ЕЛĔК. Йÿçкассинчи вăтам шкулри хор кружокĕнче Хĕрлĕ Çарпа граждан вăрçи çинчен çырнă йурăсене вĕренеççĕ. Ку вăхăта çите „Песня о Ворошилове“, „Нас побить, побить хотели“, „Песня о Котовском“ „Конноармейская“, „Песня о героях“ йурăсене вĕренчĕç.

Драмкружок граждан вăрçи вăхăтĕнчи пурнăçа кăтартакан „Салют“ пйесăна лартса пама хатĕрленет.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă тĕле заочно пулса иртекен пĕтĕм Сойузри ăмăртува хутшăнма 4 командă организациленĕ. Халĕ вăл командăсем кашни кунах тĕл пеме вĕренеççĕ.

В. Йемелйанов.

Чĕрĕ таварсем тăратассине йĕркелемеле

Сĕмĕрле комбинатĕнчи рабочисем кăçалхи плана срукчен тултарма обйазателствă илчĕç. Ун хыççăн кашни цех, сменă, бригадă пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухрĕç. Пайанхи куна илсен, ăмăртăва хутшăнман бригадăсемпе сменăсем, цехсем пачах çук. Йанвар уйăхĕн малтанхи кунĕсенче ĕçсем чылайах ăнса пычĕç. Стольарнăй цех хăшпĕр кунсенче плана 140 процент тултарса ĕçленĕ. Уйрăм стахановецсем кулленхи нормăсене 500 процента йахăн тултарса пынă.

Касйанова декабĕр уйăхĕнче торцовальнăй станок çинче ĕçлесе детальсем тăвассипе рекорд тунă. Йанвар уйăхĕнче тата та лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Плана 480 процент тултарса пырат. Çакăн хыççăн Касйанова планпа 500 процентран кайа мар тултарса ĕçлеме обйазателствă илчĕ. Стольарнăй цехра „рейсмус“ станок çинче ĕçлекен комсомолец Гуçков йулташ та йанвар уйăх планне 209 процент, Леонтйев стольар — 269 процент тултарнă. Вĕсем ĕçукçи 600 тенкĕ ытла илнĕ. Кун пек примерсем татах та пур. Вĕсен ĕçĕсем çине пăхсассăн, комбинат плана ытлашшипех тултарса ĕçлемеле пек туйăнат. Анчах комбинат çаплах начар ĕçлесе пырат. Вăл йанвар уйăх планне 86,5 процент тултарнă. Февралĕн малтанхи вунăкунлăхĕнче те плана тултараймарĕ. Хăшпĕр цехсем питех те начар ĕçлесе пыраççĕ. Акă урапа цехĕ плана 57,1 процент (цех начальникĕ Радайкин), хăма çуракан цех 58,6 процент çеç тултарнă. Йанвар уйăх планне стольарнăй тата куллен кирлĕ таварсем кăларакан цехсем кăна тултарнă.

Цехсем начар ĕçленин тĕп сăлтавĕ пĕтĕмпех материал çукки̇нчен килнĕ. Ку тĕлĕшпе снабжени уйрăмĕ иртнĕ çулхи ĕçсенчен пачах та вывод туман. Вăл çаплах нумайтарах отношенисем çырса, каласса ларса вăхăта иртерет. Уççăнах калас пулат, снабжени уйрăмĕнче ĕçлекенсем рабочисем умĕнче сăмахпа çеç лайăх ĕçлеме пулаççĕ. Декабĕр уйăхĕнче пулса иртнĕ комбинатри стахановецсен канашлăвĕнче снабжени уйрăмĕн директорĕ Сорокин пĕр вăтанмасăрах „1938 çулта матерал йĕнчен аптрамала тумастпăр, çителĕклĕ пулат. Ку тĕлĕшпе епĕр пĕтĕм вăйа хурса ĕçлетпĕр“ тесе сăмах пачĕ. Унтанпа уйăх ытла иртрĕ ĕнтĕ, анчах ĕçре улшăну çук.

Çакăн пек ĕçленĕрен те ĕнтĕ вĕсен ĕçĕ ăнăçлăн пулса пымаст. Комбинат йанвар уйăхĕнче малтан хатĕрленĕ материалсемпе çеç ĕçлерĕ. Вăл планпа кăтартнисенчен йуман йăвăçĕ—43 процент, чăрăшпа хыр вутти—33 процент, çăка—9 процент илеймерĕ. Пĕтĕмпе шутласан комбинат йанвар уйăхĕнче хăйне тивĕçлĕ чĕрĕ тавара 68 процент çеç илнĕ. Çакă ĕнтĕ вăл снабжени уйрăмĕн ĕçне кăтартакан тĕслĕх.

Комбината йăвăç тăратассипе уйрăмăнах Чăвашвăрманпром начар ĕçлет. Вăл хăйне панă плана пĕтĕмпе те 67 проц. çеç пурнăçланă. Çавăн пекех вăл 1937 çулта та договорта кăтартнисенчен: йуман йăвăçĕ тăратассине 20 процент, хурăн 32, чăрăшпа хыр—27 процент пурнăçламарĕ.

Кăçалхи çул Чăвашвăрманпром комбинатпа договор тăвассине чăсса пырат. Вĕсем план пысăкран хăраççĕ.

Комбинат чĕрĕ таварсем çителĕклĕ пулсан, паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеме пултарат. Ăна пурнăçлама снабжени организацисен хăйсен ĕçне вăхăтра пурнăçлани кирлĕ.

Хар. Лисин.

Ăмăртура мала тухнă заводра

ТУРХАН. Аслă Арапусĕнчи крахмал завочĕ Йĕпреçри „Пионер“ крахмал завочĕпе ăмăртса ĕçлет. 1937 çулти ăмăрту договорне тĕрĕсленĕ хыççăн Аслă Арапусĕнчи завод мала тухни палăрчĕ. Вăл çулталăкри плана 130 процент тултарнă.

Хальхи вăхăтра заводри пур цехсем те, çавăн пекех рабочисемпе инженерла-техникла работниксем те пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Амăр крахмал типĕтекен цех малта пырат. Хăйĕн планне кунсерен тултарса пырат. Сагă тăвакан цех кашни талăкра нормăран ытлашши 1,5 тоннă сагă кăларат. Ку цехри Клавдийа Краснова бригади нормăна йалан иртерсе тултарса пырат.

Заводăн клуб пур. Клубра музыкă инструменчĕсемпе культурă хатĕрĕсем çителĕклĕ. Патефон, балалайкă, гитарсем, т. ыт. те. Завод çумĕнче „Красный луч“ йатлă стена хаçачĕ тухса тăрат. Стена хаçачĕ лайăх ĕçлекенсен опычĕсене çутатса пырат. Çитменлĕхсене вăхăтра тăрă шыв çине кăларат. Заводра рабочисене кашни кун хаçат-журналсем вуласа парассине те лайăх йĕркеленĕ. Шаржанов йулташ кулленех информацисем тăват.

Заводра техминимум кружокĕсем ĕçлеççĕ. Нумай пулмаст техминимум кружокĕнчен Фролова, Долгова, Краснова, Иванова тата ытти нумай йулташсем “отлично” паллăпа вĕренсе тухрĕç.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлана чухне агитатор пулса ĕçленĕ рабочисем халĕ те массалă агитаци ĕçне туса пыраççĕ. Рабочисем хушшинче хут пĕлменлĕхе пĕтĕмпех пĕтернĕ. Кашни рабочи хаçат çыранса илет.

Заводра ĕç журналĕ тунă. Вăл журнал çине кашни рабочи ĕçе йусас, çитменлĕхсене пĕтерес йенĕпе хăйĕн сĕнÿне çырса пама пултарат. Ку журнал çитменлĕхсене пĕтерес ĕçре пысăк вырăн йышăнат. Мĕншĕн тесен завод руководителĕсем журналта пĕлтернĕ хыпарсем çине сийĕнчех çавăрăнса пăхаççĕ.

В. Давыдов.

Аслă Советăн пĕрремĕш Çеççи ĕçĕсене вĕренеççĕ

Уйкас Кибекри Тельман йачĕпе тăракан колхозра (Шăхасан районĕ) ССР Сойуз Аслă Советăн пĕрремĕш Çеççи ĕçĕсене вĕренес майпа колхозниксен йатарласа аслă пуху пулчĕ.

Пухура Çеççи йышăннă решенисене питĕ тĕплĕн ăнлантарса пачĕç.

Ку ĕçре уйрăмăнах учителсемпе комсомолецсем вăйа хурса ĕçлерĕç.

А. Шорников.

Кружок аван ĕçлет

Шетмĕпуç йалсоветне кĕрекен „Восток“ колхозри (Иçлей р.) комсомол организацинчи комсомолецсене вĕрентес ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Заньатисем вăхăтра пулса иртеççĕ. Анчах çав хушăрах хăш. пĕр комсомолецсем заньатисене сиктеркелеççĕ. Комсомолецсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Б. Абрикосов.

Вăрман хатĕрлевĕнчи сталинла уйăхлăх

Малтанхи кунсенче

ЙĔПРЕÇ. Февралĕн 10-мĕшĕнче вăрман хатĕрлевĕнче стахановла уйăхлăх пуçланчĕ. Йĕпреç вăрманпромхозĕ çак уйăхлăхра кăтартулă ĕçлес майпа февралĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа лучковăй пăчкасемпе ĕçлекенсем хушшинче 40 сехетлĕ курс туса иртерет. Вăл курсран лучковăй пăчкăпа ĕçлекен мастăрсем-инструктăрсем вĕренсе тухмала. Курсра стахановец-рабочисем 15 çын вĕренеççĕ. Кунсăр пуçне вăрманта ĕçлекенсем хушшинче политикăлă, культурăлă-массăлă ĕçе туса пыма культработниксене, агитаторсене уйрăм бригадăсем çумне çирĕплетнĕ. Парторганизаци культработниксене агитаторсене пухса кĕске срукла курс туса иртерет.

Йалсоветсемпе колхозсем вăрман хатĕрлев планне срукчен тултарассишĕн ăмăрту пуçарчĕç. Крупскайа йачĕпе тăракан колхоз квартăл планне мартăн 1-мĕшне тултарма пулса „Правда“ колхоза ăмăртăва чĕнчĕ. Ворошилов йачĕпе тăракан колхоз председателĕ Силвестров йулташ квартăл планне февралĕн 20-мĕшне тултарма обйазателствă илчĕ. Упакасси йалсовечĕ Йĕпреç йалсовечĕпе ăмăртăва тухрĕ.

Хăшпĕр колхозсем пысăк тимлĕхпе ĕçлесе квартăл планне тултарчĕç. Патăрйел районĕнчи „Çĕнĕ пурнăç“ колхоз пĕрремĕш квартăл планне февралĕн 5-мĕшне 103 процент тултарнă. Шăнкăртам районĕнчи „Ударник“ колхоз декабĕрĕн 1-мĕшĕнчен ку , таранччен 1000 кубла метр йăвăç турттарса кăларнă.

Анчах пĕтĕмĕшпе илсен вăрманта ĕçлессин çителĕксĕр пырат-ха. Вăрманта ĕç вăйĕ çителĕклĕ мар. Колхозсен хăйсен умĕнче тăракан ĕçсене пурнăçлассишĕн сăмахпа мар. чăнчăн ĕçпе кĕрешме тытăнмала.

Д. Михайлов.
Г. Марущев.

Пирĕн ĕçсем

Епĕр Шăнкăртам районĕнчи „Августăн 1-мĕшĕ“ колхоз членĕсем стахановла уйăхлăха хутшăнса хамăра панă вăрман хатĕрлев планне Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă уйав тĕлне пурнăçа кĕртме пултăмăр.

Хальхи вăхăтра епĕр хамăр панă сăмаха ĕçпе çирĕплетессишĕн кĕрешетпĕр. Колхозниксем вăрманта пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Вăрманта ĕçлекен колхозниксем хушшинче ĕçе тĕрĕс организацилерĕмĕр. Бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Культурăлă-массăлă ĕçе те лайăх туса пыратпăр. Çавăнпа кашни колхозник хăйĕн нормине йалан иртерсе тултарат. Пире райĕçтăвком председателĕ Сафиулин йулташ пулăшса пырат. Вăл пирĕн патра час-часах пулат.

Вăрманта çавнашкал ĕçленĕ вăхăтрах епĕр çуракине хатĕрленес йенĕпе тумалли ĕçсене те ăнăçлăн пурнăçлатпăр. Вăрлăхсене суртласа пĕтертĕмĕр. Çĕре çемçетмелли йапаласем кăларас плана 120 процент тултартăмăр. Плугсене, урапасене, лаша кÿлмели хатĕрсене тата ытти машинсене те йусаса пĕтернĕ.

„Августăн 1-мĕшĕ“ колхоз председателĕ—**Камальдинов.**

Профсойуз работникĕсен ăмăртăвĕ

Вăрманти тата йăвăçсене шывсем тăрăх йухтарнă çĕрти рабочисен сойузĕн Вăрнар районĕнчи комитечĕн работникĕсем стахановла уйăхлăха пысăк пахалăхпа иртерессишĕн кĕрешеççĕ. Сойуз комитечĕн пленум членĕсем кашнийĕх хăйне çирĕплетнĕ участкăра культурăлă-массăлă агитаци ĕçне лайăх йĕркелессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухрĕç. Бельков йулташ рабочисене куллен хаçат-журналсем вуласа парассипе организацилеме, бараксенче пилĕк кунта пĕр номĕр стена хаçачĕ кăларса тăма пулчĕ. Скворцов йулташ стахановла уйăхлăх хушшинче бараксенче икĕ спектакль лартассине, çавăн пекех икĕ хутчен струнлă оркестрпа тухса çÿрессине организацилеме пулчĕ.

Профсойузăн районри комитечĕ культурăлă массăлă ĕçе туса пыма тата вăрманти рабочисен кану вăхăтне лайăх иртерессине йĕркелеме кирлĕ условисем çителĕклĕ туса пачĕ. 26 барака хĕрлĕ кĕтес организациленĕ. Вĕсенче 13 патефон, 8 биллиард, 108 комплект шашкăсем, 12 балалайкă, 5 гитар, 7 хуткупăс, 5 комплект домино пур. Вуникĕ çĕрте радио ĕçлет. Вĕсемсĕр пуçне кĕнекесем 1495 тенкĕлĕх, плакатсем 511 тенкĕлĕх, портретсем 358 тенкĕлĕх, 40 мăшăр йĕлтĕрсем илсе панă. 314 екземпльар хаçат-журналсем çыранса илнĕ. Куçса çÿрекен кино ĕçлет.

Хальхи вăхăтра кашни баракрах вулавçăсем ĕçлеççĕ. **Н. С.**

Семенов бригади мала тухрĕ

Мăн Турханти (Вăрнар р.) Ленин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем вăрман хатĕрлев планне тултарассишĕн пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ. Колхозри 4 бригадăран пурте социалисăмлă ăмăртува хутшăннă. Кашни пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлет.

Ăмăртура 4-мĕш бригадă мала тухрĕ. Вăл вутă 182 кубла метр, хăма 12,5 кубла метр, крйаж 25 кубла метр, хатĕрлесе 182 кубла метр вутă турттарассине февралĕн 5-мĕшне пĕтĕмпех пурнăçа кĕртнĕ. Хатĕрленĕ çĕрте Н. Макаров, Гаврилов, Н. Василйев, С. Иегоров, турттарнă çĕрте бригадир С. Семенов, тата Кузьмин, Иефремов тата ытти колхозниксем аван ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленхи нормăна иртерсе тултарса пычĕç. Бригадир Семенов колхозниксене йалан ĕçпе вĕрентсе пычĕ.

Колхозниксем çулталăкри плана мартăн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма пулчĕç.

Ф. Улохов.

1937 çулхи строителствă итогĕсем тата 1938 çулхи строителствăна хатĕрлекесси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

1937 çулхи строителствă итогĕсем тата 1938 çулхи строителствăна мĕнле хатĕрленни çинчен халăх комиссариачĕсен, учрежденисен тата организацисен руководителĕсен информацине итленĕ хыççăн, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи строителствăн итогĕсем ытла та çителĕклĕ мар пулчĕç тесе палăртат: строителствă программине пĕтĕм республикипе, çавнашкалах уйрăм халăх комиссариачĕсемпе организацисем тăрăх та тултарман. Тĕслĕхрен: Стройтрест хăйĕн программине 80 процент, Çутĕç халăх комиссариачĕ йалсенчи шкул строителствине—82 проц., Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕ—76 процент çеç тултарнă. 26 хватерлĕ çурта тата Чăвашторгăн универмагне туса çитереймен. Çутĕç халăх комиссариачĕ йалсенче 11 шкул туса пĕтереймен. Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕ ача йаçли 5, сĕт кухни—1, ача çуратмали çурт—3 тата куç лечебници валлĕ 8 хватерлĕ çурт туса пĕтермен. Коммуналлă Хуçалăх халăх комиссариачĕ йенĕпе Шупашкарта водопровод тума панă лимита тултарман.

Сметăсене тепĕр хут пăхса тухасси тата техникăлă документсене йĕркелесси тӳсме çук кайа йулса çулталăк пĕтиччен тăсăлнă. Çакă вăл уйрăмăнах ача йаçлисемпе куç лечебницине тăвас, Шупашкарти тата Улатăрти електростанцисене, водопровода, Чăвашторгăн универмагне т. ыт. обйектсене тăвас ĕçре пулчĕ.

Техникăлă документсене йĕркелесе çитермен пирки строителствă организацийĕсемпе ĕçлемели договорсем тăвасси декабĕр уйăхĕченех тăсăлса пынă. Тĕслĕхрен: Шупашкарти дезостанци тата електростанци тума Стройтрестпа 1937 çулхи октабĕрĕн малтанхи кунĕсенче тин договор тунă пулнă; Шупашкарта ача йаçлисем, куç лечебници тата сĕт кухни тума договор тăвасси нойабĕр уйăхĕччен тăсăлнă. Коммуналлă банк строителствă валлĕ уçнă кредитсенчен 1937 çулхи апрелĕн 10-мĕшне 38 процент, Стройтрест тăрăх çулталăк программинчен 13,6 проц. çеç договор тунă пулнă. Çакă вăл иртнĕ çулта строителствă ĕçне йапăх туса пыни тата строителствă программине тултарманнин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри пулса тăрат.

Стройкăсем валлĕ çĕр участкисене вăхăтра уйăрса паман (Шупашкарти пединститут общежитийĕ), çĕнĕ стройкă вырăнĕсенчен кивĕ çуртсене вăхăтра куçарман (куç лечебници, Ленинград урамĕнчи шкул, йалхуçалăх институчĕн 8 хватерлĕ çурчĕ тата музык шкулĕн общежитийĕ валлĕ).

Строителствăна фондран паракан тата вырăнти строителствă материалĕсене питĕ çителĕксĕр тăратаççĕ (26 хватерлĕ çурт, Улатăрти водопроводпа мунча, Канашри акушерски шкул т. ыт. те.).

Стройтрестра ĕçтухăçлăхĕ 80 процентран та иртмест, Улатăрти стройконторăра та ĕç лайăхах пымаст.

Районти строителствăсен пахалăхĕ çителĕклĕ мар (Çĕрĕç халăх комиссариачĕн ветеринари строителстви, Çутĕç халăх комиссариачĕн шкул строителстви Йепрĕç, Тăвай, Кувакинă, Трак районĕсенче)

Строителствă хакпе йӳнетме палăртнă вырăнне хăшпĕр çĕрте хаклатса йанисем те пур. Тĕслĕхрен, Коммуналлă банк панă сведенисем тăрăх, културăпа çутĕç строителствине 31,6 проц., сывлăха сыхлав строителствине 27,5 проц., пурăнмали çуртйĕр строителствине 0.9 проц. ытлашши хаклатса йанă.

Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕпе Çутĕç халăх комиссариачĕ строителствăна питĕ çителĕксĕр йертсе пынă, çак ĕçе техникăлă работниксене шанса панă.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ — халăх комиссариачĕсем, учрежденисем тата организацисем 1937 çулта строителствă ĕçĕ начар пынинчен нимĕнле уроксем те туман тата 1938 çулхи строителствăна хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнман тесе шутлат. Çавăнпа та халăх комиссариачĕсем 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне хатĕрленӳ ĕçĕсене тума панă укçапа усă курмаççĕ тата строителствă материалĕсен фондне илсе хумаççĕ.

Тума палăртнă строителствă обйекчĕсем валлĕ техникăлă документсене йĕркелемен, тĕслĕхрен: Çутĕç халăх комиссариачĕн шкулсем тумалли тепĕр хут шутласа тухнă типовой сметăсем çук, Шупашкарта 24 хватерлĕ çурт, гостиницă тата ача-пăча болници тума пройектсем те çук сметăсем çук т. ыт. те.

Хĕллехи çулпа строителствă материалĕсене хатĕрлесси йапăх пырат (пединститут общежитийĕ, пединститутăн иккĕмĕш черечĕ т. ыт. те). Хăйăр тата кирпĕч пăртак туртарнисĕр пуçне урăх нимĕн те туртармаççĕ. Çĕнĕ обйектсем валлĕ строителствă материалĕсем хатĕрлемеççĕ.

Çĕнĕ строителствăн хăшпĕр обйекчĕсем валлĕ çĕр участкисене çирĕплетсе хуман (880 çынлăх шкул).

1938 çулта тумалли нумай строителствă обйекчĕсем валлĕ пройектсем тума та тата типовой пройектсене вырăна пама Чăвашпройектпа договорсем туман.

Стройтрестпа договор туман çеç мар, строителствă тăвакан организацисем çĕнĕ строителствă çинчен каласса та пăхман. „Росснабсбытăн" Чăваш уйрăмне строителствă материалĕсем тăратма кирлĕ пек зайавкăсем паман. Строителствăсене пĕренесем, шурă чул, извĕç тата кирпĕч тăратассине питĕ çителĕксĕр палăртса хунă:

Строителствă тăвакан организацисене тĕп тата оборотлă средствă ыйтуне татса паман, строителствă материалĕсем хатĕрлес ĕçре çакă та нумай чăрмантарат.

Стройтрестăн çĕнĕрен рабочисем илме пурăнмали çуртсем хатĕр мар.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла **йышăнат:**

1. Коммуналлă Хуçалăх халăх комиссариатне — А. С. Каплин йулташа, Çутĕç халăх комиссариатне — Р. Н. Осипов йулташа Сывлăха сыхлав халăх комиссариатне— Н. Н. Чернов йулташа 1938 çулхи строителствăна хатĕрленес тата иртерес ĕçе хăйсем йеçчен йертсе пыма хушас.

2. Халăх комиссариачĕсене тата строителствă тăвакан ытти организацисене те 1938 çулта тумалли строителствă валлĕ титулнăй спискăсене çирĕплетессине тата лимит илессине чи кĕске срукра тума хушас.

3. Строителствă тăвакан пур организацисен те куçармалли тата çĕнĕ тумалли обйектсен сводннăй (генералнăй) сметинче строителствă вырăнĕнчи кивĕ çуртсене куçарас тăкаксене те палăртмала.

Хула совечне тата пушартан сыхлакансене кивĕ çуртсене вăхăтра куçарнине тĕрĕслесе тăма хушас.

4. Госплана çак çулхи февралĕн 20-мĕшĕ тĕлне лашасемпе тата автомобилсемпе строителствă материалĕсем туртарас тарифа çĕнĕрен пăхса тухма хушас.

5. Строителствă тăвакан пур организацисен те строителствă материалĕсене туртарас ĕçре хĕллехи вăхăтпа ытларах усă курса, йăвăр материалсене (хăйăр, шурă чул, йăвăç, кирпĕч) 60 процентран кайа мар çуна çулĕпе кӳрсе хумала.

6. Строителствă валлĕ пур материалсене те тăратма „Росснабсбытăн Чăваш уйрăмне çак çулхи февралĕн 15-мĕшĕнчен кайа йулмасăр зайавкăсем памала тата унпа договор тумала.

7. Госплана çак çулхи февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне, Шупашкарти тата районсенчи строителствă валлĕ çителĕклĕ таран кирпĕч ăстан илмеллине кăтартса, строителствă обйекчĕсене уйрăм кирпĕч заводĕсем çумне çирĕплетсе, стройматериалсен балансене тума хушас.

8. Строителствă тăвакан пур организацисене те, строителствăн çĕнĕ обйекчĕсене кирлĕ пек техникăлă документсемпе йĕркелеме хушас: декретлă строителствăсене мартăн 1-мĕшĕнчен кайамар, пĕчченлĕ пройектсем тăрăх тăвакан ытти обйектсене: гостиницă, 24 хватерлĕ çурт тата ыт. те. çак çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнчен кайа мар. Чăвашпройектпа тата пройект тăвакан ытти организацисемпе февралĕн 15-мĕшĕнчен кайа йулмасăр договор тума хушас.

9. Строителствă тăвакансене пурне те, 500 пин тенкĕрен ытла тăракан обйектсенче стройкăн техникăлă пройектне тата ĕç организацин графикне тытма, ытти пур обйектсенче те ĕçсен тата стройматериалсем тăратассин календарлă планне тытма хушас.

10. Строителствă тăвакансене тата Чăвашстройтреста пур обйектсем тăрăх та строителствă хакне йӳнетес тĕлĕшпе конкретлă ĕçсен планне тума хушас.

11. Тума тытăнма ирĕк панă строителствăсен пур обйекчĕсем валлĕ те халех çĕр участкисем уйăрса хумала тата малашне титулнăй спискăсене çирĕплетсе пынă май, строителствă тăвакан организацисен, участкăсем уйăрса хума тата хатĕрленӳ ĕçĕсене тума çийĕнчех мерăсем йышăнса пымала.

12. Лимит илсе строителствăн титулнăй спискине çирĕплетнĕ хыççăн, строителствăна укçа парас тĕлĕшпе 5 кун хушшинче Спецбанкпа договор тумала.

13. Строителствă тăвакан пур организацисен те вырăнтан куçармалли тата çĕнĕ тумалли пур обйектсем валлĕ те, лимит панă тата техникăлă документсемпе йĕркеленĕ хыççăн, ĕçсене тума строителствă организацийĕсемпе пĕр ерне хушшинче договор тумала.

14. Строителствă тăвакан пур организацисен те строителствă пуçланиччен малтан строителствă ĕçĕсемшĕн ответлă çын уйăрса хурса ун çинчен Халăх Комиссарĕсен Советне тата Государствă строителствă контролне пĕлтерме хушас.

15. Госплана Стройтрест валлĕ извĕç çунтарма кирлĕ чухлĕ 10.000 кубла метр вутă уйăрса пама хушас.

16. Пур райĕçтăвкомсемпе хула совечĕсене те стройкăсене валлĕ квалификацилĕ техникăлă работниксем уйăрса пама хушас.

17. Пройектсăр тата сметăсăр строителствă тума йураманнине çинчен стройкă тăвакансене, хула совечĕсене тата райĕçтăвкомсене пурне те асăрхаттарас.

18. „Росснабсбытăн" Чăваш уйрăмĕн директорне строителствă тăвакансемпе тата стройтрестпа тунă договорсем тăрăх строителствă валлĕ планпа кӳрсе килме палăртнă тимĕр-тăмăр таварĕсене, електричествă оборудованийĕ т. ыт. те йĕркелĕ кӳрсе килсе тăма хушас.

19. Государствăн строителствă контролне çак постановленийе пурнăçа мĕнле кăртнине тĕрĕслесе результатсем çинчен çак çулхи апрелĕн малтанхи вунă кунлăхĕнче Халăх Комиссарĕсен Советне пĕлтерме хушас.

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **Л. Спасов.**

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене тăваканĕ **Н. Жуков.**

Социалисăмла промышленнăçăн промыслалă предприйатийĕсене пурне те обйазателнă йĕркепе регистрацилесси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойуз Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1934 çулхи йанварĕн 11-мĕшĕнче йышăннă 62-мĕш №-лĕ постановлени тăрăх Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнат:

1. Чăваш АССР Халăх-хуçалăх учочĕн управленине пĕтĕм республикă территорийĕ çинче государствă, кооператив тата обшчествăлă организацисен промыслалă предприйатийĕсене регистрацилеме хушас.

Регистрацилес срука 1938 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнчен мартăн 1-мĕшне çити тăвас.

2. Çакăн пек предприйатисене регистрацилеççĕ:

а) механикăлă, електричествăлă, шыв йе çил двигателĕпе ĕçлекен йе 1937 çулхи пĕр-пĕр уйăхра вիçĕ çын (килте ĕçлекенсене те çак шута кĕртсе) йе ытларах та ĕçленĕ промыслалă предприйатисене пурне те;

б) райĕçтăвкомсен, хула совечĕсен, инвалидсен кооперацин тата колхозсен пĕр çынпа йе иккĕ çынпа ĕçлекен предприйатисене, мастерскойĕсемпе производствисене, тата утлă приводпа ĕçлекен çу çапмалисене, армансене, кĕрпе сурмалисене пурне те:

в) хăйсене уйăрăмăн йе строителствă, çул-йĕр, суту-илӳ тата хатĕрлев организацисем, колхозсем, совхозсем тата ытти хуçалăх организацисем çумĕнче, çавăн пекех учрежденисемпе шкулсем çумĕнче ĕçлекен промыслалă предприйатисене;

г) чĕр тавар кăларакан тата хатĕр тавар туса кăларакан промышленнăçăн, çав шутрах пулă тытассипе вăрман ĕçĕ те, пур отраслисенчи предприйатисене те.

3. Регистрацилес йĕркене Чăваш АССР Халăх-хуçалăх учочĕн управленийĕ тăват.

4. Регистраци бланкисене вăхăтра тăратассишĕн тата цифăрсен тĕрĕслĕхĕшĕн ответлăха предприйатисен руководителĕсемпе аслă бугалтерсем çине, колхозсен председателĕсемпе счетовочĕсем çине тата халăх-хуçалăх учотĕн оргăнĕсем çине хурас.

5. Предприйатисен тата халăх-хуçалăх учочĕн системинчи социалисăмла промышленнăçăн регистрацине иртерес ĕçре ĕçлекен учот работникĕсене регистраци пĕтиччен урăх ĕçе йама чарас.

6. Халăх-хуçалăх учотĕн управленине социалисăмла промышленнăç регистрацийĕн итогĕсене çак çулхи апрелĕн 1-мĕшне Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советне тăратма хушас.

7. Регистрацирен пăрăнакан йе срукĕсене пăхăнман предприйатисен руководителĕсем çине 100 тенке çити штраф хумала тăвас.

8. Халăх-хуçалăх учотĕн управленине, ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1933 çулхи нойабĕрĕн 27-мĕшĕнче йышăннă 82/2530-мĕш №-лĕ постановлени тăрăх, регистраци бланкисем çинче тĕрĕс мар сведĕнисем панă предприйати руководителĕсене уголовлă йĕрке тăрăх ответ тыттарма хушас.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **Л. Спасов.**

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене тăваканĕ **Н. Жуков.**

Шупашкар хули, 1938 çулхи февралĕн 7-мĕшĕ.

ЙУТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

ВАТАМ КИТАЙРА

ÇУИЧЖОУ, 12-II. (ТАСС). Февралĕн 11-мĕшĕнче кăнтăрла Йапони салтакĕсем (300 çынна йахăн) Хуайхе йуханшыв урлă çĕнĕрен виçĕ çĕртен ишсе каçма хăтланнă. Шыв урлă каçнă чухне китайецсем Йапони салтакĕсене 150 çынтан кайа мар шыва путарнă. Йапонин тепĕр 40 салтакĕ шыв урлă ишсе каçнă пулнă. Анчах хире-хирĕç тытăçса çапăçнă вăхăтра, китайецсем Йапони салтакĕсене йăлтах пĕтернĕ.

Çав кунах каçхине Йапони салтакĕсем (600 çынна йахăн) артиллери хӳттипе Линхуайгуанрен хĕвеланăçнеле (Фын-Йанран çурçĕрпе хĕвелтухăçнеле) каллех Хуайхе йуханшывĕ урлă каçма хăтланнă. Вĕсенчен 200 салтак çеç шыв урлă ишсе каçнă. Çыран хĕрне тухсан çапăçу пулнă. Йапонецсем 80 çын вилнĕ, вĕсенчен виççĕшĕ взвод командирĕсем.

Февралĕн 7-мĕшĕнче Линхуайгуан районĕнче артиллерирен пенипе аманнă Китай салтакĕсем хушшинче газсемпе аптранисене те палăртнă. Йапони артиллерийĕ химилĕ снарйадсемпе пени пĕр хут çеç мар ĕнтĕ.

Дин-Йуан хули районĕнче (Фын-Йанран çурçĕрелле) партизансем пысăк активлăх кăтартаççĕ. Февралĕн 10-мĕшĕнче вĕсем Йапонин 200 çынлă отрйадне йăлтах пĕтерсе тăкнă. Партизансем сăртсем çине лартса пемели пĕр оруди тата винтовкăсем нумай туртса илнĕ. Йапонин Дин-Йуан хулинче тăракан çарсем хуларан тухса кайнă, вĕсем сăрт-тусем патнелле чакнă. Çав кунах партизансем Йапони тылĕнче телефонпа телеграф проводисене татса тăкнă.

ЙАПОНИ АВИАЦИ ĔÇĔСЕМ

ÇУЙЧЖОУ, 12-II. (ТАСС). Февралĕн 12-мĕшĕнче Йапонин çирĕм самолочĕ Китай позицисем çине бомбасем пăрахнă. Китай позицисем Хйа-Хуайхе йуханшыв çыранĕсенче пулнă. Февралĕн 11-мĕшĕнче Йапони самолочĕсем Китайри пысăк хуласем çине темиçе хутчен те пырса тапăннă. Чанша хули çине (Хунан провинцин столици) 30 бомбă пăрахнă. Темиçе çурт ишĕлсе аннă. Мирлĕ пурăнакан халăхсем хушшинче 50 çын ытла вилнĕ. Çавăн пекех Йапонин тăхăр самолочĕ Наньйан çине (Хенан провинцин кăнтăрпа хĕвеланăç пайĕ) бомбăсем пăрахнă. Вĕсем 10 бомбă ытла пăрахнă.

Кунсăр пуçне Йапони самолочĕсем (пурĕ 9 самолот) Кантон—Коулун тата Кантон—Ханкоу чукунçулĕсем çине те темиçе хутчен пырса тапăннă.

Вĕсем 20 бомбă ытла пăрахнă. Йапонин 7 самолочĕ Анцин йатлă хула çине 10 бомбă ытла пăрахнă. (Анцин—Анхуей провинцин столици).

ТАНЦЗИН-ПУКОУ ЧУКУНÇУЛ ФРОНЧĔ

ÇУЙЧЖОУ, 13-II. (ТАСС). Йапони çарĕсем Çуйчжоу хули патнелле пыраççĕ. Йапони çарĕн командованийĕ Танцзин—Пукоу чукун çулĕ Лунхай чукунçулĕпе пĕрлешнĕ вырăнти çав стратеги йенчен питех те кирлĕ пункта туртса илме шутлат пулмала. Китай çарĕн чаçĕсем агрессор çарĕсене хирĕç хыттăн тăма хатĕрленеççĕ.

Йапони правителствин отвечĕ

ТОКИО, 13-II. (ТАСС). Домей Цусин агенстви Йапони правителстви Америкă, Англи тата Франци правителствисем чĕнсе каланине хирĕç ответ панине пичетлесе кăларнă. Паллă ĕнтĕ, Америкă, Англи тата Франци правителствисем Йапони правителствинчен Йапонин тинĕс строителстви çинчен пĕлтерме ыйтса çырнă пулнă.

Йапони ответĕнче çапла каланă: „Аслă державăсем Йапони правителстви хăйĕн тинĕс строителстви çинчен кирлĕ сведенисем парассинчен пăрăнат, тесе пĕлтереççĕ. Анчах вăл хĕçпăшалсене сахаллатас тĕлĕшпе Йапони нимĕнле договорсемпе те çыхăнса тăман пирки пулса пырат. Йапони правителстви: строителствă ĕçĕсем çинчен пĕлтерни тинĕс строителствине хисеп йенчен пӳлни çук чухне, ыйтува тĕрĕссĕн татса парассипе тата хĕçпăшалсăрлатассипе килĕшӳлĕ пулмаст,—тесе шутлат. Мĕнле те пулин сăлтавсем йе саралнă хыпарсем çине пăхса çĕршывсем Йапони хутшăнман договорта кăтартса хунă правасемпе усă курнинче Йапонин ĕç çук".

Карапсен пахалăхне тата тупăсен калибрне чакарас тĕлĕшпе пулмали конференцийе хутшăнма сĕнӳ панă пирки Йапони правителстви, епĕр унашкал конференци ăнăçлă пуласси пирки иккĕленетпĕр, мĕншĕн тесен, хисеп тĕлĕшĕнчен чакармасан унтан усă пулас çук, тесе каланă.

НЬЙУ-ЙОРК, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС). Государствă секретарĕ Хелл (Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен урăхçĕршыв ĕçĕсен министрĕ) пичет представителĕсемпе калаçнă чухне, тинĕс-çар флотне хĕçпăшаллантарни çинчен Йапони правителстви панă ответ пирки çапла каланă:

„Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен правителстви, сахалтарах хĕçпăшалланас тата ăна чакарас тĕлĕшпе йаланах пĕр-пĕрипе килĕшсе ĕçлесшĕн тăрăшат. Веçĕмсĕр хĕçпăшлланассине чăрман, ăна хавхалантаракан пур тĕрлĕ событисем пирки те Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен правителстви пит пăшăрханат".

Çапла каланине, Йапони правителстви тинĕс çинчи хĕçпăшалланас ĕçе ӳстерес тĕлĕшрен тунă чĕнӳве Хелл йышăннă, тесе ăнланмала, тесе шутлаççĕ.

Йĕрĕсене шăлса йакатаççĕ...

ВЕНĂ, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС). Румынире çĕнĕ правителствă туса хунă хыççăн та хаçатсем Бутенко йулташа фашисла бандăсем вăрлани пирки суйа тата пачах пулма пултарайман сведенисем сарма пăрахмаççĕ. Çав вăхăтрах Совет Сойузĕн Бухарестри полпредствин официаллă пĕлтерĕвĕсене цензурă пичете йамасăр тытса тăрат. Пичет, суд следователĕ çине кăтартса, „Ланчийерсем" (фашисла организаци) полпредствă сотрудникĕсен çурчĕ умĕнче манифестаци тунине те тĕрĕс тесе йышăнмаст, вăл фактă пурте пĕлеççĕ, ун çинчен полпредствă çийĕнчех, манифестаци пулса иртнĕ хыççăнах, йутçĕршыв ĕçĕсен министерствине официаллă йĕркепе пĕлтерсе хунă. Çавăнпа пĕрлех Бутенко йулташ кам иккенĕ пирки иккĕленӳ сарма хăтланаççĕ, ăна йе Хĕрлĕ Çар командирĕ тесе йат параççĕ, йе лотчик, теççĕ. Пĕтĕм çак ĕçе, уйрăмăнах пичетре фактсене пăсса çырас, пăтраштарса йарас ĕçе, Германи, Итали тата Полша миссийĕсем хутшăнни ытларах та ытларах палăрса пырат. Румынири полици репортĕрĕсен ĕçĕсене йертсе пырас тĕлĕшпе, Италири „Стефани" агенствăн корреспонденчĕ Трандафило виçесĕр активлăн тăрăшат, вăл Бутенко йулташа вăрлакăнĕ пирки хăй шухăшласа кăларнă сведентсем йарса тăрат. Самахран, Бутенко йулташ „Катайама" йатлă совет парохочĕ çине ларса кайнă текен халлап сарнă, хал палăртнă тăрăх, „Катайама" Румыни портĕнчен февралĕн 2-мĕшĕнче, урăхла каласан, Бутенко йулташа вăрличчен тăватă кун маларах тухса кайнă пулнă. Çак маневерсен пурин те ĕнтĕ пĕр тĕллев—йĕрсене çухатасси, следствийе пăтраштарса йарасси; çавăнпа та ĕнтĕ, вăрлакансен йĕрĕсем çине халиччен те ӳкмен тенинчен тĕлĕнмели çук, Румыни влаçĕсем вăрлакансене лайăх пĕлеççĕ, ун пирки иккĕленмели те çук.

Çамрăк художниксен кружокĕ

Палтайри (Йетĕрне р.) вăтам шкулта çамрăк художниксен кружокне организацилерĕç. Кружока 10-мĕш класра вĕренекен С. Козлов-художник йертсе пырат. Ачасем кружока пысăк кăмăлпа çӳреççĕ.

Н. Тимофейев.

Тракра радиоузел пулат

ТРАК. Кăçалччен Тракра радиоузел пулман. Кăçалхи çуракине хатĕрленнĕ май, Тракри çыхăну уйрăмĕ 500 точкăлă радиоузел лартат. Çуртне туса пĕтернĕ те ĕнтĕ. Çак кунсенчех аппаратсене вырнаçтарма тытаççĕ.

Б. Иванов.

Испанири фронтсенче

ЦЕНТРТИ ФРОНТ.

Февралĕн 11-мĕшĕнче çĕрле пăлхавçăсем Елъ Парто секторĕнче (Мадридран çурçĕрпе хĕвеланăçнеле) артиллерирен хыттăн пеме пуçланă. Мадрид çине те пенĕ. Республикă батарейĕсем вĕсене хирĕç пенĕ. Артиллерирен пĕрпĕрин çине персе тăрасси пĕр сехете йахăн пынă.

Пăлхавçăсем артиллерирен пенипе Мадридра çуртсем ишĕлнĕ тата гражданла халăхсем хушшинче вилнисем пур.

КАНТАРТИ ФРОНТ.

Испани оборонă министерстви февралĕн 12-мĕшĕнче 22 сехетре пичетлесе кăларнă пĕлтерӳ тăрăх, Сиерра дел Агила районĕнче Саламеа дела Серена секторĕнче (Валсекилоран çурçĕрпе хĕвеланăç йенеле) февралĕн 11-мĕшĕнче пăлхавçăсем хăйсен позицисене малала куçарнă. Февралĕн 12-мĕшĕнче Сиерра де Аргалйанес районĕнче фашиссем темиçе хутчен те атакă тунă. Анчах республикă çарĕсем вĕсен пур атакисене те сирнĕ.

„Спартак" обшчествин Пĕтĕм Сойузри ăмăртувĕ

„Лесоруб" промертел коллективĕ Сойузăпе пĕрремĕш вырăн йышăннă

Куйбышев хулинчен пире, Чăваш республикĕнчен кайнă йĕлтĕрçĕсем ăмăртнин результачĕсем çинчен пĕлтерчĕç.

„А" группă тăрăх (республикăсемпе крайсен тата облăçсен сборнăй командисем) 9 çын: Бурашников, Г. Иванов, Богданов, Халапсин, Ф. Иванов, М. Гущина, Самойлова, Пашкова, Петрова, йулташсем хутшăнса ăмăртнă. Чăваш республикĕн команди Совет Сойузĕпе, Мускавпа Ленинград командисем хыçĕнчен, 3-мĕш вырăн йышăннă.

5 километр хушăна пĕчченшерĕн ăмăртса чупас тĕлĕшпе Чăваш республикĕ 4-мĕш вырăн йышăннă (24 минут та 51,5 секунда), Самойлова 10-мĕш вырăна тухнă (27 минут та 12,8 секунда), 20 километр хушăна ăмăртса чупнă çĕрте Бурашников 10-мĕш вырăн йышăннă (1 сехет те, 34 минут та 11 секунда).

„Г" группă тăрăх (йалсенчи промертел коллективĕсем) пирĕн республикăран Б. Собачкинăри (Сĕнтĕрвăрри р.) „Лесоруб" вăрманпромертелĕн коллективĕ хутшăнса ăмăртнă (Карпухов, Степанов, Лаврентйев, Карпова, Карпухова, Йаранова). „Спартак" обшчествин „Лесоруб" промертел çумĕнчи коллектив йалсенчи коллективсен группи тăрăх Совет Сойузĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Арçынсен 10 километрта пĕчченшерĕн чупмали ăмăртувĕнче Карпухов 2-мĕш вырăн (51 минут та 37 секунда), Степанов 4-мĕш вырăн (54 минут та 18 секунда) йышăннă. Хĕрарăмсен 5 километра пĕчченшерĕн чупмали ăмăртувĕнче Карпова 1-мĕш вырăн 33 минут та 43 секунда), Карпухова 3-мĕш вырăн (39 минут та 08 секунда) йышăннă.

М. З—в.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăваканĕ **И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.**

Пĕлтерни

Шупашкар хули Государствă кивçенлĕхĕпе перекет ĕçĕсене пулăшакан комиссийĕ (комсод) хула совечĕн финанс пайĕпе пĕрле февралĕн 15-мĕшĕнче комсодсен, ирĕклĕ страхлас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсен тата укçа пухакансен канашлăвне туса иртерет. Унта ĕççынисен пурнăçне ирĕклĕ тата коллективлă страхлас çĕнĕ правилăсемпе паллаштараççĕ.

Канашлу Аслă суд çуртĕнче, каçхине 6 сехетре пуçланат.

Государствă кивçенлĕхĕпе перекет ĕçĕсене пулăшакан хула комиççийĕ. Хула совечĕн финанс пайĕ.

Шупашкарти болницара ĕçлеме

медицинă ĕçне пĕлекен сестрасем, санитаркăсем тата хуçайственниксем КИРЛĔ.

Аслă врач патне пымала.

ГОСУДАРСТВĂ РЕГИСТРАЦИЙĔ

РЕГИСТРАЦИЛЕНĔ ОРГАНИЗАЦИ ЙЕ ПРЕДПРИЙАТИ ЙАЧĔ: ЧĂВАШСЕН СПЕЦИАЛИЗАЦИЛЕНĔ ÇĔВĔ ÇĔЛЕКЕНСЕН ТАТА ТĔРĔ ТĔРЛЕКЕНСЕН ПРОМЫСЛА СОЙУЗĔ „ЧУВАШШВЕЙСТРОЧСОЙУЗ"

АДРЕС: Шупашкар хули, Калинин урамĕ. 49 мĕш № çурт, расчот счочĕ № 1440 госбанкăн Чăваш республикинчи кантурĕнче.

Регистрациленĕ предприйати мĕнле пĕрлешӳве кĕрет.	Пĕрлештерсе тăракан организацин правлĕни адресĕ	Регистрациленĕ предприйати ăçта тата мĕн ĕçлет	Хăççантанпа ĕçлет	Ăçти финанс органĕнче регистрациленнĕ.
Чăвашпромсойуза	Шупашкар хули, театралнăй урам, 3-мĕш № çурт	Чăваш АСС Республикинчи çĕвĕ çĕлекен тата тĕрĕ тĕрлекен промысла кооперативлă артелсене йертсе пырат, кăтартусем парса тăрат	1938 çулхи февралĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа	Чăваш АССР финанс халăх комиссариатĕнче 1938 ç. февралĕн 9-мĕшĕнче № 48

„ЧУВАШШВЕЙСТРОЧСОЙУЗ" ОРГБЮРО

Председателĕ СТАЙНОВА.
Бухгалтер НАГОРКИНА.

„Чăваш коммунĕ" çырăнса илмелли хакĕсем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха —7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 80. Гор. Чебоксары. Типография № 1 Чувашполитграфтреста. Заказ № 83. Тираж 16.500 Б2—Б4 см. 1—3 п. л.